К 81
Т-41
32075-чув

ТИМУХХА ХĔВЕТĔРĔ

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИНЕ ВĔРЕНМЕЛИ КĔНЕКЕ

## ГРАММАТИКĂПА ТĔРĔС ÇЫРМА ВĔРЕНЕССИ

ПУÇЛАМĔШ ШКУЛ ВАЉЉИ

ПĔРРЕМĔШ ПАЙ

Хакĕ 40 пус, переплет 25 пус

ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИЗДАТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР 1934

Национальная библиотека ЧР
4-032075




32075
ПРОВЕРЕНО
1959



Кф 81.(ЧУВ)-2
К
Т41

ТИМУХХА ХĔВЕТĔРĔ

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИНЕ ВĔРЕНМЕЛИ КĔНЕКЕ

## ГРАММАТИКĂПА ТĔРĔС ÇЫРМА ВĔРЕНЕССИ

## ПУÇЛАМĔШ ШКУЛ ВАЉЉИ

ПĔРРЕМĔШ ПАЙ

**1-мĕшпе 2-мĕш çул ваљљи**

*II-мĕш издани*

ЧАССР Халăх çутĕç комиссарĕ çирĕплетнĕ

ПРОВЕРЕНО
1959

Чувашская республиканская библиотека
Спецфонд
№ 3062

ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИЗДАТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР 1934

81,635,1-921

# ТУПМАЛИ

## Пĕрремĕш çул


§ 1. Пуплев . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
§ 2. Пуплеври сăмахсем çыхăнса тăни . . . . . . . . 9
§ 3. Сăмахсене пысăк саспаллипе çырасси . . . . . . . . 10
§ 4. Сăмах татăкĕ. Сăмахсене йепле куçарасси . . . . . 12
§ 5. Сасă . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 14
§ 6. Уçă сасăсемпе хупă сасăсем . . . . . . . . . . 15
§ 7. Ђ, Ӈ, Ť саспаллисене çырасси . . . . . . . . . . 16
§ 8. Б, г, д, ж, ц, ф, о саспаллисене çырасси . . . . . . . 19
§ 9. Мăшăр сăмахсене çырасси . . . . . . . . . . . . 20
§ 10. Сасă вăрăмăн илтĕнни, икĕ пĕр пек саспалли çырни . . 21


## Иккĕмĕш çул.


§ 1. Ыйтулă пуплев . . . . . . . . . . . . . . . . . 24
§ 2. Кăшкăрулă пуплев . . . . . . . . . . . . . . . 27
§ 3. Мăшăр сăмахсем . . . . . . . . . . . . . . . . 30
§ 4. Хытă уçă сасăсемпе çемçе уçă сасăсем . . . . . . . . 31
§ 5. Хытă уçă сасăлă сăмахсемпе çемçе уçă сасăлă сăмахсем 32
§ 6. Ђ, Ӈ, Ť саспаллисене çырасси . . . . . . . . . 33
§ 7. Сыпăклă сăмахпа сыпăксăр сăмах . . . . . . . . 35
§ 8. Ç, ч, ť сасăсем йунашар сасăсене çемçетни . . . . . 42
§ 9. Вăрăмăн илтĕнекен сасăсене çырасси . . . . . . . . 43
§ 10. С сасă Ш пек йе Ç пек илтĕнни . . . . . . . . 46
§ 11. Б, г, д, ж, з сасăсем . . . . . . . . . . . . . . —
§ 12. Йанăранă майлă илтĕнекен хупă сасăсем . . . . . . . 48


ПРОВЕРЕНО
20 W

32075чув

Редактор Т. Матвеев. Техредактор А. Быков.
Ответст. корректуру читали Н. Андреев и М. Алексеев.

Послано в производство 20/II 1934 г. Подписано к печати 28/III—1934 г.
Уп. Чувашлита № 1333. Чувашгиз № 31. Ст. ф. б. 62×94/16. Объем 3 п. л.
В п. л. 54.000 т. зн. У—1. Заказ № 0307. Тираж 30.000 экз.

Отпечатано в типографии № 1 ЧувашГИЗ а, г. Чебоксары, Канашская, 16.

Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА им. Н. Гоголя

# ПĔРРЕМĔШ ÇУЛ.

## § 1. Пуплев.

*1-мĕш ĕç.* Малтан Иван çинчен, унтан Анна çинчен, йулашкинчен Йакку çинчен каланине вуласа тухăр. Унтан пурне те çырса илĕр.





*Иван вулат̆.*
*Йакку шутлат̆.*
*Анна çырат̆.*

*2-мĕш ĕç.* Малтан вĕçен кайăксем çинчен каланине, унтан тискер кайăксем çинчен каланине çырса илĕр.

Асăрхăр: **авăтат̆, вĕрет** йышши сăмах вĕçĕнче **а** хыççăн **т̆** çырмала: **ат̆**; **е** хыççăн **т** çырмала: **ет.**

### Чĕрчунсен сасси.

Автан авăтат̆. Кашкăр улат̆. Лаша кĕçенет. Çăхан кăранклатат̆. Йытă вĕрет. Сысна нăриклетет. Çерçи чĕвĕлтетет. Ĕне мĕкĕрет. Шăши чиклетет.

*3-мĕш ĕç.* **Кăвакал** çинчен шухăшлăр та шухăшланине çырса хурăр. Пысăк саспаллинчен пуçласа çырăр. Çырса пĕтерсен, пăнчă лартăр. Кăвакал çинчен каллех мĕн те пулин шухăшлăр та шухăшланине çавăн пекех çырăр.

*4-мĕш ĕç.* **Пулă** çинчен, **хурт** çинчен, **çăхан** çинчен, **шăши** çинчен, **çĕлен** çинчен, **шăрчăк** çинчен, **кăвакарчăн** çинчен, **ĕне** çинчен каланине вулăр.

Хыçалта, айне йĕр туртнă сăмаха вуланă чух, сасă аннине асăрхăр. Сасă тăрăх шухăш пĕтнине пĕлме пулаť.

## Мĕнле çӳреççĕ.

Пулă ишет. Хурт шăваť. Çăхан вĕçет. Шăши чупаť. Çĕлен шăваť. Шăрчăк сикет. Кăвакарчăн вĕçет. Ĕне утаť.

### Сăмахпа каланă уйрăм шухăша пуплев теççĕ.

Мĕнле çӳреççĕ тенинче миçе пуплев? Кашни пуплеве мĕнле саспаллипе пуçласа çырнă? Кашни пуплев хыççăн мĕн лартнă? Пуплеври йулашки сăмаха каланă чух, сасă мĕнле улшăнаť?

*5-мĕш ĕç.* Малали сăмахсене çырса илĕр. Çырса илнĕ чухне, пăнчăсем вырăнне пуплев тума кирлĕ сăмаха кĕртсе лартăр. Кашни пуплев хыççăн пăнчă лартăр.

Асăрхăр: **касаççĕ, çĕлеççĕ** йышши сăмах вĕçĕнче **аççĕ, еççĕ,** сыпăкра икĕ **ç** çырмала: **аççĕ, еççĕ.**

## Çак йапаласемпе мĕн тăваççĕ.

Йĕппе çĕлеççĕ. Пăчкăпа ... Кашăкпа ...
Пуртăпа касаççĕ. Перопа ... Плугпа ...
Шăпăрпа ... Çĕçĕпе ... Çавапа ...

**Кĕртсе лартмали сăмахсем:** татаççĕ, çулаççĕ, шăлаççĕ, çыраççĕ, çийеççĕ, сухалаççĕ.

*6-мĕш ĕç.* а) **Кĕр** çинчен каланă пуплевсене пурне те вуласа тухăр.

б) **Хĕл** çинчен каланисене вуласа тухăр.

в) Тăман çинчен, çăмăр çинчен, хир çинчен, çĕр çинчен каланă сăмахсене тупăр.

г) Çуна тупанĕ çинчен, пас çинчен, çăмăр çинчен, çĕр çинчен каланă пуплевсене çырса илĕр.

## Кĕр.

Çăмăр çăвать.
Çĕр нӳрелет.
Кураксем вĕçсе
кайаççĕ.
Хир пушă.

## Хĕл.

Çырмара пăр.
Пас йăлтăртатать.
Çуна тупанĕ
чăкăртатать.
Тăман вĕçтерет.

*7-мĕш ĕç.* Картин йĕркине пăхса, пуплевсене çырса илĕр.



*Атте хаçат вулать.*
*Анне чӳрече шăлать.*
*Кĕркури кĕлетке тăвать.*

*8-мĕш ĕç.* Çырса илнĕ чухне пăнчăсем вырăнне кирлĕ сăмахсене кĕртсе лартăр. Кашни пуплев хыççăн пăнчă лартăр.

## Мĕнле ĕçе мĕнпе тăваççĕ.

Çĕре ... сухалаççĕ. Вутта ... çураççĕ. Тумтире ... тасатаççĕ. Урайне ... шăлаççĕ. Лашана ...

тасатаççĕ. Кĕпене ... çĕлеççĕ. Çăкăра ... касаççĕ. Шӳрпене ... сыпаççĕ. Шыва ... ĕçеççĕ.

**Кĕртсе лартмали сăмахсем:** кашăкпа, шăпăрпа, пуртăпа, йĕппе, хырчăкпа, куркапа, шчуткăпа, плугпа, çĕçĕпе.

*9-мĕш ĕç.* Малтан савăт çинчен каланă пуплевсене çырса илĕр, унтан колхоз çинчен каланă пуплевсене çырса илĕр.

*Савăтра рабочисем ĕçлеççĕ. Колхоза çĕнĕ плугсем килчĕç. Тырă вырма пурте харăс тухрĕç. Колхоз уйĕнче йăран çук. Савăтра машинăсем тăваççĕ. Савăтрах ытти йапаласене те нумай тăваççĕ.*

*10-мĕш ĕç.* а) Статйана вуласа тухăр. Кашни пуплев хыççăн кăшт чарăнса тăрăр.

## Хĕлле.

Хĕвелĕн ăшши сахал. Çырмасем шăнса ларнă. Пур çĕрте те шурă йур. Сивĕсем шартлатаççĕ. Çынсем ăшă тумтир тăхăнса çӳреççĕ. Час-часах тăман тухать. Ĕнер кац пирĕн хаппхана йур хӳме таран хывса лартнă. Икĕ сехет чаврăмăр.

б) Çак халĕ вуланă статйара мĕн çинчен çырнă? Унта пурĕ миçе пуплев? Малтанхи пуплевре миçе сăмах? Иккĕмĕшĕнче? Чи пысăк пуплев кунта хăшĕ? Унта миçе сăмах?

в) Иккĕмĕшпе тăваттăмĕш пуплеве çырса илĕр.

*11-мĕш ĕç.* а) Çак икĕ статйана пуплевĕсене вырăнне лартмасăр çырні. Çак статйасене майласа, пуплевĕсене вырăнне лартса, вуласа тухăр.

## 1. Уђкипе Михађа.

Ăна шыв сапса йакатнă.
Уђкипе Михађа тăвайкки тунă.
Кайран иккĕшĕ те йарăннă.

## 2. Качакаран хăрани.

Çавăнтанпа епĕ качакаран хăратăп.
Епĕ аран-аран тартăм.
Пĕрре мана качака тĕкрĕ.

б) Майланă хыççăн „Уђкипе Михађа“ йатлă статйана çырса илĕр.

*12-мĕш ĕç.* „Микула шыва кайни“ йатлă статйа çырса парăр. Малтан ăна сăмахпа каласа тăвăр, унтан тин çырса парăр.

*Микула шыва кайни.*
*Пĕрре Микула пăр çинче....*
*Сасартăк вăл пăр çӳхе*
*çĕре пырса.... Пăр çурăлса....*
*Микула пилĕк таран шыва*
*анса.... Çакна... курнă. Вăл*
*Микулана...туртса кăларнă.*

*13-мĕш ĕç.* а) Çак пуплевсене вуласа тухăр. Çакăнта малтанхи пуплевре хăш сăмахра сасă анаŤ? Иккĕмĕш пуплевре хăш сăмахра анаŤ? Виççĕмĕш пуплевре?

1. Ачасем шкулта.
2. Ачасем шкулта вулаççĕ.
3. Ачасем шкулта вулаççĕ, çыраççĕ.

> **Пуплев вĕçĕнче сасă анаŤ.**
> **Пуплеве вуласа пĕтерсен, кăштах чарăнса тăратпăр.**
>
> **Сасă аннине, вулама чарăнмалине пĕлтерме пăнчă лартаççĕ.**

б) Çак пуплевсенче хăш сăмахра сасă анаŤ?

Акă кăмака. Кăмакана вутă хутаççĕ. Кăмакаран ăшă тухаŤ. Кăмакара апат-çимĕç пĕçереççĕ.

*14-мĕш ĕç.* Çак пуплевсене çырса илĕр, сасă анакан сăмахсене айалтан туртăр.

*Кăранташ-вĕренмеми йапала. Унпа çыраççĕ. Çырăччен ăна шĕвĕртеççĕ. Кăранташ патрак, час хуçăлаŤ. Ăна çивĕчĕ çĕçĕпе шĕвĕртес пулаŤ.*

*15-мĕш ĕç.* а) Çак статйана лайăх вуласа тухăр.

## Хĕллехи сивĕ каç.

Çĕр тĕттĕм. Пĕлĕт таса. Йĕри-тавра шурă йур. Пĕлĕт çинче çăлтăрсем. Сивĕ чĕпĕтет.

Аслă çулпа обоз пыраҫ. Çыннисем çуна хыççăн чупкалаççĕ. Пĕри хăлхине хыпаласа пăхаҫ. Пĕрин мăн сухалĕ шап-шурă.

б) Çак статйара мĕн çинчен каланă? Унта пурĕ миçе пуплев? Епĕр пуплевсене мĕнрен тăватпăр? Пуплевĕн йулашки сăмахĕнче сасă мĕнле улшăнаҫ? Сасă анакан сăмахсене кăтартса парăр. Пуплеве мĕнле саспаллипе пуçласа çыраççĕ? Пуплев хыççăн мĕн лартаççĕ? Пăнчă лартни мĕне пĕлтерет?

## § 2. Пуплеври сăмахсем çыхăнса тăни.

*16-мĕш ĕç.* Сăмахсене пĕр-пĕринпе çыхăнтарса, пуплев тăвăр. Пăнчăсем вырăнне сăмахсем лартăр.

Савăт ... Савăтсем ... Пуртă ... Пуртăпа ... Тиртен ... Епĕ ... Есĕ ... Вăл ... Епĕр ... Есĕр ... Вĕсем ...

**Кĕртсе лартмали сăмахсем:** вулатăп, ĕçлет, касаҫ, кĕрĕк тăваççĕ, вулатпăр, ĕçлеççĕ, вулатăн, вулаççĕ, касаççĕ, вулаҫ, вулатăр.

*17-мĕш ĕç.* Пуплев шухăша тĕрĕс пĕлтертĕр тесе, çырса пĕтермен сăмахсен вĕçĕсене тупса çырăр.

Епĕ шкул... килтĕм. Халĕ шкул... ларатăп. Шкул... кăçпа кил... кайатăп. Кил... выԃăх ... апат паратăп.

Çĕçĕпе касаççĕ, шăпăр... шăлаççĕ. Ырашран çăнăх тăваççĕ, çăнăх... çăкăр тăваççĕ.

Кĕркури Петĕр... кĕнеке пачĕ. Кĕнеке... картин нумай. Петĕр кĕнеке вула ... ларат.

*18-мĕш ĕç.* Çакăнти сăмахсен вĕçĕсене тупса вуласа тухăр, унтан çырса илĕр.

### Лаша пăхакан.

Мĕтри лашасене пăхаҫ. Вăл вĕсене вăхăт... апат пар..., вăхăт... шăвараҫ. Мĕтри лаша вити...

таса, ăшă тытат̌. Вăл лаши... те час-часах тасатат̌. Мĕтри лашисем вăй..., аван ĕçле..., Мĕтри—ударник.

*19-мĕш ĕç.* Çакăнти хăшпĕр сăмахсен вĕçĕсене тупса пуплев тăвăр. Пуплевĕсене тĕрĕс çырăр.

| | |
|---|---|
| Пулă шыв пурăн | Ватă лаша час ывăн |
| Вĕрене вăрман çитĕн | Иван çĕнĕ кĕрĕк çӳре |
| Виктăр шкул вĕрен | Ачасем çĕнĕ кĕнеке вула |
| Кăмака ăшă тух | Кăранташ хут çи çыраççĕ |

## § 3. Сăмахсене пысăк саспаллипе çырасси.

*20-мĕш ĕç.* а) Кунта кам сăнĕсене ӳкернĕ? Вĕсен йачĕсене, хушамачĕсене мĕнле саспаллипе пуçласа çырнă?



Владимир Илйич Ленин.



Иоçиф Виссарионăвич Сталин.

б) Класра вулакан кĕнекерен учитĕл кăтартнă стат̌йаран çын йачĕсене тупăр. Асăрхăр: вĕсене мĕнле саспаллипе пуçласа çырнă.

Çын йачĕсене, хушамачĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ.

*21-мĕш ĕç.* Пăнчăсем вырăнне çын йачĕсене çырăр.

Епĕ ... йатлă. Манăн атте ... йатлă. Мана ... ... теççĕ. Манăн анне ... йатлă. Манăн пичче ... йатлă. Манăн йулташсем ..., ..., ... йатлă. Епĕ, ..., ... пĕр партă хушшинче ларатпăр.

*22-мĕш ĕç.* Пăнчăсем вырăнне çын йачĕсене çырăр.

Мĕтрипе ... тетрачĕ таса, ... (камăн?) таса мар. Пăлаки хитре çырать, ... тата хитререх çырать. Пайанхи дежурнисем— ... ... (кампа кам?) тускана ... (мĕнле?) тасатнă. Пайан ... (кам-кам?) урока вăхăтра çитеймерĕç. Ĕнер ... шкула килмерĕ. ... шкула пĕр кун сиктермесĕр çÿрет.

*23-мĕш ĕç.* Учитĕл кăтартнă статйасенчен çын йачĕсене пĕр 15 таран çырса илĕр.

*24-мĕш ĕç.* Асăрхăр: çакăнта йал йачĕсене, хула йачĕсене, шыв йачĕсене мĕнле çырнă?

Пирĕн йал Шăмат йатлă. Вăл Вăрнартан 51 километрта, Шупашкартан 55 километрта, Аталтан пĕр 35 километрта. Пире чи çывăх хула—Йетĕрне, чи çывăх пысăк шыв—Сăрă.

| |
|---|
| **Йал, хула, шыв йачĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ.** |

*25-мĕш ĕç.* Ыйтусене хирĕç ответсем çырăр.

Сирĕн йал мĕн йатлă? Вăл хăш районра? Сирĕн йал совечĕ хăш йалта? Вăл йал советне мĕнле-мĕнле йалсем кĕреççĕ? Епĕр мĕнле республикăра пурăнатпăр? Чăваш республикин тĕп хули мĕн йатлă? Вăл мĕнле шыв çинче ларать? Сирĕн йал шывĕ мĕн йатлă?

*26-мĕш ĕç.* Хăвăр пĕлекен йалсен, хуласен, шывсен йачĕсене çырăр.

Епĕ пĕлекен йалсем: ...
Епĕ пĕлекен хуласем: ...
Епĕ пĕлекен шывсем: ...

*27-мĕш ĕç.* Хăвăр пĕлнĕ колхозсен йачĕсене çырăр.

Епĕ пĕлекен колхозсем: „Сталин“ колхозĕ, „Хĕрлĕ Çăлтăр“, „Урпу“, ...

*28-мĕш ĕç.* а) Пилĕк пуплев çырса парăр. Кашнинче çын йачĕ тĕл пултăр.

б) Хăвăр пĕлекен йытă йачĕсене çырăр.

Епĕ пĕлекен йытă йачĕсем: Кампур, Мĕншыран, Моçкă, ...

## § 4. Сăмах татăкĕ. Сăмахсене йепле куçарасси.

*29-мĕш ĕç.* Сăмахсене татса каласа темиçе пайа уйăрăр.

Тĕслĕх: Ла-ша, су-рăх, кă-ма-ка, чӳ-ре-че.

Тырă, ыраш, сĕлĕ, урпа, тулă, пăрçа, кантăр, йĕтĕн, паранкă, ак, выр, вырас, выртăмăр.

| Сăмаха темиçе пайа уйăрма пулать. |
|---|
| Çав пайа татăк теççĕ. |

**Ак, вир**—пĕр татăклă сăмахсем.
**Ты-рă**—икĕ татăклă сăмах.
**Па-ран-кă**—виçĕ татăклă сăмах.

*30-мĕш ĕç.* Вĕçен кайăк йачĕсене тупăр та вĕсене татăкăн-татăкăн уйăрса çырăр.

*31-мĕш ĕç.* Уйрăм татăксене çыпăçтарса сăмах тăвăр. Çĕнĕрен пулнă сăмаха татăкăн-татăкăн уйăрса çырăр.

ту — лă
су — лă
ху — лă
пу — лă

ка — йас
ка — рас
ка — тас
ка — сас

чў—ре—че
пĕ—ре—не
пĕ—ре—мĕк
сĕ—ре—тĕп

*32-мĕш ĕç.* **Па, ку, ка, пи** татăкпа пуçланакан сăмахсем тупса парăр. **Ма** татăкпа пĕтекен виçĕ сăмах тупса парăр. **Пăр** татăкпа пĕтекеннине виçĕ сăмах тупса парăр.

*33-мĕш ĕç.* Виçĕ çын йатне, виçĕ йал йатне, виçĕ шыв йатне татăкăн уйăрса çырăр.

*34-мĕш ĕç.* Асăрхаса пăхăр: Çак кĕнекере 10-мĕш страницăра пĕр йĕркене кĕмен сăмаха тепĕр йĕркене йепле куçарнă? 12-мĕш страницăна пăхăр: унта мĕнле сăмаха куçарнă? Йепле куçарнă?

**Сăмах йĕркене кĕмесен, унăн пĕр татăкне йе ик-виç татăкне тепĕр йĕркене куçараççĕ.**

*35-мĕш ĕç.* Сăмахсене йепле куçармалине кăтартса парăр.

Тĕслĕх: Па-ранкă, паран-кă, вĕ-рентекен, вĕрен-текен, вĕренте-кен.

Купăста. Чĕкĕнтĕр. Кăшмансем. Кишĕрсем. Лартрăмăр. Шăвармала. Çумламала. Ак. Ларт.

*36-мĕш ĕç.* Çак йумахсен туппине тупăр, унтан пуплеври сăмахсене татăкласа çырса тухăр.

## Тупмали йумахсем.

Пĕр çĕлĕкĕн хĕрĕх саплăк. Çеçен хирте туман урапа кусаť. Шурă ана, хура вăрлăх. Çула сивĕ, хĕлле ăшă. Тимĕр йыттăн сўс хўре. Алăсăр, урасăр—кĕпе тăхăнаť. Икĕ сăмсалă, икĕ куçлă.

Тупписем: Йĕппе çип, купăста пуçĕ, çавраçил, шурă хут çине çырни, тӳшек, нӳхреп, хачă.

## § 5. Сасă.

*37-мĕш ĕç.* а) Ака, упа, ĕмĕт, ĕмĕр сăмахсене татăкăн-татăкăн уйăрăр.

| | |
|---|---|
| а—ка | ĕ—мĕт |
| у—па | ĕ—мĕр |

**А татăка тата уйăрма пулать-и? Ка татăка? У татăка? Па татăка? Е татăка? Мĕт татăка?**

**Па татăкпа та татăкăн пĕр пек пай пур-и? Мĕт татăкпа мĕр татăкăн пĕр пек пай пур-и? Мĕнле сасăсем вĕсен пĕр пек?**

б) Малти ĕретре пур сăмахра та мĕнле сасă пур? Иккĕмĕш ĕретре? Виççĕмĕшĕнче?

1. Сахăр, кашăк, чашăк, ухват, кăмака.
2. Тăвар, сĕт, турăх, тăпăрч, тутлă.
3. Тӳпе, тӳн, йун, йӳçĕ, тӳс, ӳпре.

**Сăмахра темиçе сасă пулать.**

**Кашни сассăн хăйĕн саспаллийĕ пур.**

**Сасса чĕлхе-çăварпа калатпăр, хăлхапа илтетпĕр. Саспаллине алăпа çыратпăр, куçпа куратпăр.**

*38-мĕш ĕç.* а) Çак сăмахсене асăрхăр: вĕсен сассисем пĕтĕмпех пĕр пек-и, пĕр пекех мар-и?

| | | | |
|---|---|---|---|
| ала | пура | курка | тап |
| ула | хура | курак | тăп |
| хула | хуран | курăк | тĕп |
| хулă | хурăн | кушак | туп |

**Сӑмахӑн пӗр сассине урӑхла каласанах, вӑл тепӗр сӑмах пулса ларма пултарать.**

б) Ҫак сӑмахсене ҫырса илӗр. Иккӗмӗш сӑмахра с выранне ҫ ҫырӑр, урӑх сӑмах пулнине асӑрхӑр.

Тӗслӗх: Кас—каҫ, пус—пуҫ, сап—ҫап.

| | | |
|---|---|---|
| сӑмах— | писет— | сур— |
| сапла— | сӑтӑр— | сут— |
| ӗсле— | сӳре— | сӗр— |
| сиплӗх— | сыхӑ— | сӗт— |
| симӗс— | сыр— | сис— |

*39-мӗш ӗҫ.* **Чӑваш чӗлхинче пурӗ 33 саспалли. Ҫав 33 саспаллипе епӗр чӑваш чӗлхинчи пур сӑмаха та ҫырма пултаратпӑр.**

Ҫав саспаллисем ҫаксем: **а, б, в, г, д, ӑ, е, ӗ, ж, з, и, й, к, л, љ, м, н, њ, о, п, р, с, ҫ, т, ҭ, у, ӳ, ф, х, ц, ч, ш, ы.**

## § 6. Уҫӑ сасӑсемпе хупӑ сасӑсем.

*40-мӗш ӗҫ.* А, ӑ, е, у, м, п, к, х, с сасӑсене уйрӑм каласа пӑхӑр.

Хӑшӗсене каланӑ чухне ҫӑвара ытларах уҫатпӑр? Хӑшӗсене каланӑ чух ҫӑвара хупарах паратпӑр? Хӑш сасӑсем уҫҫӑн илтӗнеҫҫӗ, хӑшӗ аплах мар?

А, у, ы, ӑ, е, ӳ, и, ӗ, о—уҫӑ сасӑсем.
Й, р, л, љ, н, м, в, п, к, х, с, ҫ, ш, т, ҭ, ч, б, г, д, ж, з, ц, ф—хупӑ сасӑсем.

*41-мĕш ĕç.* Çак пуплевсене вуласа пăхăр, унтан çырса илĕр. Çырса илнĕ чух, а, у, ы, ă, е, ӳ, и, ĕ уçă саспаллисене айалтан туртăр.

Тырă лайăх пултăр тесен.

Анасене кĕркуннех сухаласа пăрахмалла. Çуракине ир тумалла. Лайăх сухамалла сӳремелле. Таса вăрлăх акмалла. Çумсене пĕтермелле.

*42-мĕш ĕç.* Çак сăмахсене вăрахăн татăкласа вулăр.

Малтанхи сăмаха каланă чух епĕр çăвара миçе хут уçатпăр? Иккĕмĕшне каланă чух? Ыттисене каланă чух?

| | | |
|---|---|---|
| сă-мах | кол-хоз | ка-ла-ма-ла |
| шу-хăш | ра-ди-о | ил-тĕ-нет |
| шу-хăш-лас | ре-во-љу-ци | ит-ле-рĕ-мĕр |

Çакăнти сăмахсене татăкăн-татăкăн çырса илĕр, уçă саспаллисене айалтан туртăр. Кашни татăкра миçешер уçă сасă? Икĕ уçă сасăлă татăк пур-и? Уçă сасăсăр пĕр татăк та пулсан пур-и?

**Сăмахра миçе уçă сасă, çавăн чухлĕ татăк пулаť.**

*43-мĕш ĕç.* Пĕр татăклă сăмах 5 сăмах çырăр. 2 татăклă, 3 татăклă, 4 татăклă сăмах тăватшар çырăр. Кашнине татăкласа çырăр, уçă саспаллисене айалтан туртăр.

## § 7. Љ, Њ, Ť саспаллисене çырасси.

*44-мĕш ĕç.* Љ, Њ, Ť саспаллисене мĕнле уçă сасăлă татăкра çырнине асăрхăр.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Љa-ва | вы-љăх | мă-кăњ | тă-раť | ťап-кă |
| ле-ре | нӳр-лĕх | йĕ-тĕн | ти-рет | теп-кĕ |
| лĕ-пĕш | мĕн-лĕх | вĕ-рен | те-пĕр | тир-кĕ |

а) **Љ, Њ, Ť** саспаллисене мĕнле уçă сасăлă татăксенче çырнă?—**А, У, Ы, Ă** сасăлă татăксенче çырнă. Мĕншĕн?— Ахалин сăмах урăхла пулса кайаť: Љава—лава, ťапкă—тапкă, тăраť—тăрат, тухаť—тухат, мăкăњ—мăкăн пулаť.

б) **Е, Ӳ, И, Ĕ** уçă сасăлă татăксенче **Љ, Њ, Ť** саспалли çырни пур-и? Унта йаланах мĕн çыраççĕ?

> **Љ, Њ, Ť саспаллисене А, У, Ы, Ă уçă сасăлă татăксенче кăна çыраççĕ.**
>
> **Е, Ӳ, И, Ĕ уçă сасăлă татăксенче Л, Н, Т çыраççĕ.**

Ытти тĕслĕхсем: Ми-ха-љa, Уљ-ки, И-љуш, Њу-ра, Ми-ťук, На-ťуш, Ва-њук, Са-њук, тă-раť, йу-раť, и-йуњ, и-йуљ, çен-ťа-бĕр, ок-ťа-бĕр, ре-во-љу-ци.

*45-мĕш ĕç.* Каласа çыртармала (диктовкă). Паллă тунă татăксенче хăçан **Љ, Њ, Ť**, хăçан **Л, Н, Т** çырнине асăрхаттармала.

## Çуркунне пуçланни.

Йăлтăртатаť сар хĕвел,
Кунран кунах ăшăтаť.
Сисмесĕрех сивĕ хĕл
Çур ăшшине паранаť.
Пур çĕрте те шурă йур
Хĕвелпеле пусăрнаť.
Пĕчĕккĕнех çуна çул
Навусланаť, хуралаť.

3920 75 чув
Чувашская Республиканская библиотека им. Н. Гоголя

* * *

Ачасем куӈкисене ампарсене пуҫтарса хучӗҫ, шӑллӗсене выљама армансем туса параҫҫӗ. Йал ҫуракине хатӗрленет.

Выљӑхсем хӗвел ҫине тухса тӑраҫҫӗ. Часах вӗсем ак йешӗл курӑк ҫинче те ҫӳрӗҫ. Шӑнкӑрчсем ҫуркунне тума таврӑнни ерне ытла ӗнтӗ. Кураксем вӗсенчен те малтан килчӗҫ.

*46-мӗш ӗҫ.* Учитӗл кӑтартнӑ тӑрӑх, вуланӑ статйасенчен малтан Љ саспаллилӗ сӑмахсене ҫырса илӗр, унтан Ӈ саспаллилӗ сӑмахсене ҫырса илӗр. Асӑрхӑр: вӗсене мӗнле уҫӑ сасӑлӑ татӑксенче ҫыраҫҫӗ.

**Љ саспаллилӗ сӑмахсем:** выљӑх, выља, кукӑљ, куҫҫуљ, куљан, ахаљ, хаљ (халӗ), Љава, Уљуш, Паља, Уљки, Михаља, ийуљ, ...

**Ӈ саспаллилӗ сӑмахсем:** супӑӈ, мӑкӑӈ, хуӈӑм, Аӈук, Ваӈук, Саӈук, ӈаӈӑ, Ӈурӑ, Ӈамаӈ, ийуӈ, ...

*47-мӗш ӗҫ.* а) Учитӗл кӑтартнӑ тӑрӑх, вуланӑ статйасенчен Ť саспаллилӗ сӑмахсем ҫырса илӗр. АŤ вӗҫлине, тата МАСŤ вӗҫлине кашнине вуншар кӑна ҫырса илӗр.

**Ť саспаллилӗ сӑмахсем:** аťа, аťӑр, ťыха, ťапкӑ, уťук, Миťук, Наťук, Каťук, Наťуш, ҫенťабӗр, окťабӗр, ...

б) Ť саспалли мӗнле вӗҫре ытларах тӗл пулаť? Пулаť, лараť йышши сӑмах вӗҫӗнче **а** хыҫҫӑн мӗн ҫыраҫҫӗ? Килет, ҫӳрет йышши сӑмахсенче вӗҫӗнче **е** хыҫҫӑн мӗн ҫыраҫҫӗ?

**ПУЛАŤ**, **ЛАРАŤ** йышши сӑмах вӗҫӗнче А хыҫҫӑн Ť ҫыраҫҫӗ: **АŤ**.

**КИЛЕТ**, **КӖРЕТ** йышши сӑмах вӗҫӗнче Е хыҫҫӑн Т ҫыраҫҫӗ: **ЕТ**.

*48-мĕш ĕç.* Сăмах вĕçĕнче пăнчăсем вырăнне АТ̆ йе ЕТ çырăр.

Шăнкăр-шăнкăр шыв йух..., шăнкăрч чĕппи шыв ĕç... Уй-хирсенче тыр каш..., колхоз чĕри савăн... Çырма йух... кĕрлесе, йур йурланăн туйăн... Йешĕл курăк ăшĕнче чечек сап-сарă ӳс... Улмуççи çурăл... Ыраш шăркана лар... Çӳлте тăри вĕç..., пĕрмай йурă йурл...

*49-мĕш ĕç.* Вăрăм йĕр хыççăн кирлĕ сăмахсене тупса çырмала.

Илет—парат̆, тухат̆—, кăларат̆—, хытат̆—, хуралат̆—, типет—, савăнат̆—, кулат̆—, сӳнтерет—, анат̆—, сутат̆—, пĕчĕкленет—.

*50-мĕш ĕç.* суккăр курмаст̆, хăлхасăр илтмест.

> **МЕСТ** татăкра Т çыраççĕ.
> **МАСТ̆** татăкра Т çыраççĕ.

а) Пăнчăсем вырăнне **маст̆** йе **мест** татăк çырăр.

Чĕлхесĕр калаç... Уксак хытă утай... Тимлесе ĕçлемесен, ĕç ăн... Шăтăк-çурăка питĕрмесен, пӳрт ăшă пул... Ылттăн хĕвел савăнмаст̆, çутă куна çутат..., пĕлĕт айне пытанат̆, хăй çуттинчен вăтанат̆.

б) Тунине пĕлтерекен сăмахпа йунашар туманнине пĕлтерекен сăмах çырăр.

Çырат̆—çырмаст̆, çывăрат̆—çывăрмаст̆, çывăхарат̆—, çыпçăнат̆—, çыртат̆—, çыхат̆—, чыхса тултарат̆—, чышат̆—, чыслат̆—, чыхăнат̆—, ӳкет—, ĕçлет—, илет—, килет—, çитет,—йӳçет—.

## § 8. Б, г, д, ж, з, ц, ф, о саспаллисене çырасси.

*51 мĕш ĕç.* Çак сăмахсене хитре çырса илĕр.

Оçипăв, колхоз, комиççи.
Федотăв, телефон, шеф.
Цех, революци, центнĕр.
Захарăв, Зайцĕв, Золăтăв.
Гордейĕв, август, килограм.
Борисăв, букварь, республикă.
Данилăв, декабĕр, радио.
Жукăв, инженер, Журавлов.

*52-мĕш ĕç.* Малали сăмахсене çапла уйăрса çырса илĕр:

1. Хула йачĕсем:
2. Уйăх йачĕсем:
3. Çын çӳрекен йапаласем:
4. Хушаматсем:

Мускав, Ленинград автомобил, пăрахут, йанвар, февраљ, март, Белов, Данилăв, Григорйĕв, аероплан, çилçуна, апрел, май, ийуњ, ийуљ, библиотекă, радио, республикă. Ваçилйĕв, автобус, урапа, август, çенťабĕр, окťабĕр, декабĕр, Шупашкар, Уљйанăвск, Самар, Сапожникăв, Владимирăв. Захарăв, агроном, милици, грузовик, рабочи, Çĕрпӳ, Йетĕрне.

## § 9. Мăшăр сăмахсене çырасси.

*53-мĕш ĕç.* а) Çак пуплевсене вуласа тухăр. Унта мăшăр сăмах пурĕ миçе? Вĕсене мĕнле çыраççĕ?

Ĕне **сĕт-çу** парать. Сысна—**аш-какай** хапрăкĕ. Вăрман—**уй-хир** хӳтлĕхĕ. **Кайăк-кĕшĕк—хурт-кăпшанкă** тăшманĕ.

| |
|---|
| **Мăшăр сăмахсене кĕске йĕрпе сыпăçтарса çыраççĕ.** |

б) Çак тĕслĕхсене çырса илĕр.

Мăшăр сăмахсем: кил-çурт, сӳс-кантăр, сĕт-çу, ача-пăча, урлă-пирлĕ, кукăр-макăр, унта-кунта, лăй-лай, йăлтăр-йăлтăр, йăлтăр-йалтăр.

*54-мĕш ĕç.* Учитĕл кăтартса панă статйасенчен мăшăр сăмахсене 20 йахăн çырса илĕр.

## § 10. Сасă вăрăмăн илтĕнни, икĕ пĕр пек саспалли çырни.

*55-мĕш ĕç.* Çак сăмахсене асăрхăр.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ĕне **а**ш**ĕ** | **ана** | **т**ĕт**ĕм** | **чĕ**р**и** |
| Павăл **а**шш**ĕ** | **анне** | **т**ĕтт**ĕм** | **чĕ**рр**и** |

**Ш** сасă **ашĕ** сăмахра мĕнле илтĕнет, **ашшĕ** сăмахра мĕнле илтĕнет?—**Ашĕ** сăмахра кĕске, **ашшĕ** сăмахра вăрăм. **Т** сасă **тĕтĕм** сăмахра, тата **тĕттĕм** сăмахра мĕнле илтĕнет? Сасă вăрăмăн илтĕнсен, миçе саспалли çыраççĕ?

| |
|---|
| **Сасă вăрăмăн илтĕнсен, икĕ саспалли çыраççĕ.** |

*56-мĕш ĕç.* Каласа çыртармала.

Ир тăрсассăн, пит çусассăн, кĕç чупатпăр шкулала. Тăнкăр-танкăртатрĕ параппан сасси, йан-йанах йанрарĕ пионер йурри. Çийесси те, ĕçлесси те пĕрлешӳлĕ хаљ йăлтах.

Турчăка пур çинче алла вутта чикмеççĕ. Ватта туйа кирлĕ, пĕчĕкçĕ ачана выљамали кирлĕ. Пăтта çу пăсмасť, тырра навус пăсмасť. Чĕппе хурчăка тытаť, тилĕ чăххине те тиркемест.

*57-мĕш ĕç.* **Çак тĕслĕхсенче и умĕн хупă сасă кĕскенĕн йе вăрăмăн илтĕннине асăрхăр. Вăрăмăн илтĕнсен, икĕ хупă саспалли çырăр.**

Пурте йăслаççĕ: ĕни мĕкĕрет, сысни çухăраť, йăтти вĕрет, чăххисем кăтиклеççĕ. Ачасем чӳречесене çыпăçтарма тытăннă: пĕри хутне касаканни пулнă, тепĕри чуста сĕрекенни пулнă, виççĕмĕшĕ çыпăçтараканни пулнă. Сана мĕнле хут кирлĕ: шурри-и, кăвакки-и, хĕрли-и, симĕсси-и?

*58-мĕш ĕç.* **Çакăнта вăрăм йĕр хыççăн кирлĕ сăмаха çырăр.**

а) Алă—алли, пăтă—пăтти, тырă—, сасă—, сăнă , çĕçĕ—, çутă—, çакă—, тăрă—, тĕрĕ -, çӳпĕ—, тылă—, вăтă—, сарă—, ырă—, чĕрĕ—, тутă—.

б) Аван—аванни, чăмăр—чăмăрри, çирĕп—, кăвак—, кĕçĕн—, пысăк—, пĕчĕк—, çĕтĕк—, лайăх—, лайăхрах—, хытăрах—, ансăртарах—, кайакан—кайаканни, килекен—

килекенни, вулакан—, ĕçлекен—, ӳсекен—, ăмăртакан—.

*59-мĕш ĕç.* Çакăнти сăмахсенче, илтĕннине пăхса, и умĕн йе пĕр хупă сасă, йе икĕ хупă сасă çырăр.

Хура—хури, шурă—шурри, лаша—, йытă—, кĕвĕ—, кивĕ—, ула—, усал—, йĕпе—, çирĕп—, кайнă—, кайакан—, кайас—, килнĕ—, килекен—, килес—, ансăр—, тăвăр—, чĕрĕ—, лутра—, çӳлĕ—.

*60-мĕш ĕç.* Каласа çыртармала. Мĕнле тĕрĕс çырнине ачасем хăйсем çакăнтине пăхса тĕрĕслесе тухмала.

## Çуркунне вăрманта.

Ачасемпе вăрмана кайрăмăр. Ĕнер анчах çăмăр çунă. Пайан хĕвел ытла та савса пăхать: ăшă, лăпкă çил йарса, пурне те ачашлать.

Вăрмана часах çитрĕмĕр. Унта кайăк сассисем йанăраççĕ. Улмуççисене шурă-кĕрен чечек хупласа илнĕ, тураттисем те палăрмаççĕ. Çĕмĕрт те çурăлнă, чечекĕсем шапшурă. Йăвăççем çулçисене кăларма хатĕрленсе тăраççĕ. Айалта курăксем ӳсеççĕ, хăшĕ чечекĕсене кăларнă, хăшĕ кăларман-ха.

Чечексем хушшинче вĕлле хурчĕсем курăнкалаççĕ. Вĕсем пыл ваҙҙи тутлă сĕткен пуçтараççĕ.

Вăрманта сывлăш уйрăмăнах уçă, таса.

Пит аван, пит илемлĕ çуркунне вăрманта!

---

# ИККĔМĔШ ÇУЛ.

## § 1. Ыйтулă пуплев.

*1-мĕш ĕç.* а) Çак статйана лайăх ăнланса вуласа тухăр. Çапла вулăр: пĕри ыйтăвĕсене вулаť, тепри отвечĕсене вулаť. б) Сасă мĕнле улшăннине асăрхăр. в) Ыйтулă пуплев хыççăн мĕнле паллă лартнине асăрхăр. г) Кайран ыйтулă пуплевсене çырса илĕр.

* * *

Камăн ку çĕршыв: çарансем, хирсем?

— Çакă пурте пирĕн—колхоз çĕрĕ.

Мĕн кунта кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ.

— Вăрман турттараççĕ, кирпĕч тăваççĕ, çуртсем лартаççĕ.

Мĕн ваљљи?

— Шкул ваљљи, выљăх-чĕрлĕх ваљљи, пахча çимĕçĕ ваљљи, савăт ваљљи.

*2-мĕш ĕç.* а) Çак ыйтусене вуласа тухăр. Ответне пĕр сăмахăн калăр. Сăмахран: Тасататăп, йе: Çук, тейĕр. Сасă мĕнле улшăннине асăрхăр.

Есĕ шăлсене тасататăн-и? Апат умĕн аллусене çăватăн-и? Мунча кĕретĕн-и? Çывăрас умĕн аллу-уруңа çăватăн-и? Тумтире таса тытатăн-и? Санăн партă таса-и?

**Ыйтусене вуланă чух, сасă мĕнле улшăнаť? Çĕкленет.**

**Пуплевре ыйту пулсан, ун пек пуплеве <u>ыйтулă пуплев</u> теççĕ.**

**Ыйтулă пуплев хыççăн ыйту палли(?) лартаççĕ.**

б) 1-мĕш ĕçри статйара ыйтулă пуплев миçе? Мĕнле-мĕнле пуплевсем? 2-мĕш ĕçре миçе? Мĕнле-мĕнле пуплевсем? Ыйтулă пуплев хыççăн мĕн лартаççĕ? Ыйтулă пуплевре **и** сыпăк пулсан, ăна мĕнле çыраççĕ?

в) Çак 2-мĕш ĕçри ыйтулă пуплевсене çырса илĕр. **И** сыпăка айалтан туртса çырăр.

*3-мĕш ĕç.* Ыйтупа ответне вулăр. Сăсă ыйтусене вуланă чух мĕнле улшăннине, ответне вуланă чух мĕнле улшăннине асăрхăр. Йулашкинчен кашни ыйтупа унăн ответне çырса илĕр.

| Ыйтусем. | Ответсем. |
|---|---|
| Хĕветĕр килте-и? | Хĕветĕр килте. |
| Вăл сывă-и? | Вăл сывă мар, чирлĕ. |
| Вăл çывăрать-и? | Вăл çывăрать. |
| Вăл шăнса пăсăлман-ши? | Вăл шăнса пăсăлнă. |
| Тухтăра чĕннĕ-и? | Тухтăра чĕннĕ. |

Кунта ахаль пуплеврен ыйтулă пуплев йепле тăватпăр? **И, ШИ** сыпăка мĕнле çыратăр?

> **И, ШИ сыпăка кĕске йĕрпе сыпăçтарса çыраççĕ: вăл-и, килте-и, çавă ши, килте-ши.**

*4-мĕш ĕç.* Çак пуплевсене ыйтулă туса вулăр.

Тĕслĕх: Пирĕн пайан екскурсие пулать тени вырăнне Пирĕн пайан екскурсие пулать-и? тесе çырăр.

Пирĕн пайан екскурсие пулать. Епĕр вăрмана кайатпăр. Пайан çанталăк аван. Çăмăр пулмасть. Екскурсийе пурте кайатпăр. Хамăрпа пĕрле Улайккана та илсе кайатпăр.

*5-мĕш ĕç.* а) Ыйтăвĕсене хирĕç отвечĕсене çырăр.

## Анкетă.

1. Есĕ мĕн йатлă?
2. Аçу мĕн йатлă?
3. Санăн аçу кам? (уйрăм хресчен, колхозник).
4. Есĕ миçе çулта?
5. Есĕ хăш йалсем?
6. Сирĕн шкула мĕнле шкул теççĕ.
7. Вăл шкул хăш йалта?
8. Есĕ хăш группăра вĕренетĕн?
9. Есĕ миçемĕш çул вĕренетĕн?

б) Анкетăри айалтан туртнă сăмахсене асăрхаса пăхăр: вĕсем мĕнле пуплевсенче пулаççĕ? Вĕсене мĕн сăмахĕ теме пулат?—Ыйту сăмахĕ. Кунти ыйтулă пуплевсенче мĕнле ыйту сăмахĕсем пур? Çавсене çырса илĕр.

Ыйту сăмахĕсем: мĕн,...

*6-мĕш ĕç.* Кашни ыйту сăмахне хирĕç ответра пулакан сăмахĕсене тупса çырăр.

1. Кам?—Комсомолĕс, пионер.
2. Камран?—Председателрен, çекретартен.
3. Мĕн?
4. Мĕнле?
5. Миçе?
6. Миçенĕн?
7. Ăçта?
8. Ăçтан?
9. Хăçан?
10. Хăçантанпа?

Председателрен, çекретартен. Комсомолĕс, пионер. Хĕрлĕ, хастар. Хачă, çĕçĕ. Улттă, вунулттă. Иккĕн, çиччĕн. Хулара, савăтра. Хуларан, савăтран. Пĕлтĕртенпе, ĕнертенпе. Кăçал, йалан.

*7-мĕш ĕç.* Кашни паллă тунă сăмахăн ыйтăвне тупса ыйтулă пуплев çырăр. Малтан сăмахăн каласа тухăр.

Тĕслĕх: Петĕр çĕрле урамра <u>мĕн</u> илтсе вăранса кайнă?

## Колхоз тăшманĕ.

Петĕр çĕрле урамра <u>кăшкăрашнине</u> илтсе вăранса кайнă. Вăл <u>урама</u> сиксе тухнă. Урамра <u>халăх</u> чупнă. Колхоз çурчĕсем хыçĕнчен <u>тĕтĕм</u> курăннă. <u>Ĕнесен</u> вити çуннă. Ăна <u>кулаксем</u> тивертсе йанă. Колхозниксем пушара <u>часах</u> сÿнтернĕ. <u>Кулаксене</u> арĕсленĕ.

*8-мĕш ĕç.* Сылтăм йенчи пур ответа та вуласа тухăр. Малтанхи ответăн ыйтăвне чухласа илĕр. Иккĕмĕш ответăн ыйтăвне тупăр. Кашни ыйтăва çырăр, ун хыççăн ответне те çырăр.

| Ыйтусем. | Ответсем |
|---|---|
| 1) . . . . . . . . . . | 1) Вăрмана. |
| 2) . . . . . . . . . . | 2) Майăр татнă. |
| 3) . . . . . . . . . . | 3) Пакша курнă. |
| 4) . . . . . . . . . . | 4) Тытасшăн пулнă. |
| 5) . . . . . . . . . . | 5) Çук, тытайман. |

*9-мӗш ӗҫ.* Тулли ответ ҫырӑр. Ответра кирлӗ сӑмахсене **ыйтӑвӗнчен** илӗр.

## Хӗрлӗ ҫар пуҫлӑхӗ.

Пирӗн Хӗрлӗ ҫар пуҫлӑхӗ кам? (**Клим Йефремӑвич Ворошилӑв**). Вӑл миҫе ҫул тултарсан шахтӑра ӗҫлеме пуҫланӑ? (**Ултӑ ҫул тултарсан**). Кунне ӑна миҫе пуҫ тӳленӗ? (**Вунӑ пус**). Кайран вӑл ӑҫта ӗҫленӗ? (**Кӗтӳҫӗ пулнӑ, кулак патӗнче тарҫӑра пурӑннӑ, савӑтра рабочи пулса ӗҫленӗ**). Ворошилӑва мӗншӗн темиҫе хут арӗсленӗ, ссылкӑна йанӑ? (**Рабочи клас тӑшманӗсене хирӗҫ кӗрешнӗшӗн**). Октабӗр револуцийӗ вӑхӑтӗнче вӑл мӗн тунӑ? (**Хӗрлӗ ҫар отречӗсен командирӗ пулнӑ, совет влаҫӗшӗн ҫапӑҫнӑ**).

*10-мӗш ӗҫ.* Ыйту тӑрӑх статйа ҫырӑр. Ответра кирлӗ сӑмахсене хӑшне хыҫалта ҫырнинчен илӗр.

## Октабӗр револуцийӗ.

Ку револуцийе мӗншӗн Октабӗр револуцийӗ теҫҫӗ? Ку револуцийе мӗнле парти йӗркелесе йертсе пынӑ? Коммуниссен парти ҫулпуҫӗ ун чух кам пулнӑ? Октабӗр револуцийӗччен хапрӑксем, савӑтсем, лайӑх ҫӗрсем камсен аллинче пулнӑ? Халӗ вӗсем пурте камсен аллинче?

Отвечӗсем: Мӗншӗн тесен вӑл октабӗр уйӑхӗнче пулнӑ; коммуниссен партийӗ; Ленин; капиталиссен, ҫӗр улпучӗсен; рабочисемпе хресченсен аллинче.

*11-мӗш ӗҫ.* Ҫаксене ҫырса илӗр. Кирлӗ **вырӑна пӑнчӑ йе ыйту палли** лартӑр.

### Шӳтсем.

Мӗн тӑватӑн
— Нимӗн те тумастӑп
Лешӗ мӗн тӑват
— Мана пулӑшат

Йытӑ, мӗншӗн вӗретӗн
— Кашкӑра хӑрататӑп
Йытӑ, мӗн хӳрӳне хӗстеретӗн
— Кашкӑртан хӑратӑп.

## § 2. Кӑшкӑрулӑ пуплев.

*12-мӗш ӗҫ.* Ҫак пуплевсене кӑтартулӑ, уҫҫӑн вуласа тухӑр. Сасӑ мӗнле улшӑннине асӑрхӑр. Хыҫалта мӗнле паллӑ лартнине асӑрхӑр. Унтан ҫырса илӗр.

* * *

Пур çĕрте те чĕнӳ, хаваслану, ăмăрту.
— Пурте ĕçе!
— Колхозсем çирĕпленччĕр!
— Савăтсем, плана ытлашшипех тултарар!
— Ударниксем сывă пулччăр!
— Хĕрлĕ çар сывă пултăр!
— Сталин йулташ сывă пултăр!
— Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

*13-мĕш ĕç.* Сулахай йенчипе сылтăм йенчи пуплевсене танлаштарса пăхăр. Сылтăм йенчи пуплевсене мĕнле вулатпăр? Вĕсем хыçне мĕнле паллă лартнă? Вăл мĕне пĕлтерет-ши?

| | |
|---|---|
| 1. Лăпкă каç. | Ах, йепле лăпкă каç! |
| 2. Кунта савăк. | Йепле кунта савăк! |
| 3. Кун шăрăх. | Ну, кун! |
| 4. Ачине шел. | Ех, шеремет ачи! |
| 5. Караçăм килмест. | Ан килтĕр! |
| 6. Пăру ĕмет. | Пăру ĕмет! |
| 7. Ача йĕрет. | Ача йĕрет! |
| 8. Улăхра тилĕ пур. | Улăхра тилĕ пур! |

**Пуплевре кăшкăру пулсан, ăна кăшкăрулă пуплев теççĕ.**
**Кăшкăрулă пуплев хыççăн кăшкăру палли (!) лартаççĕ.**

12-мĕш ĕçре кăшкăрулă пуплев миçе? Çак 13-мĕш ĕçре миçе? Çак ĕçри кăшкăрулă пуплевсене çырса илĕр.

*14-мĕш ĕç.* а) Çакăнти кăшкăрулă пуплевсене çырса илĕр.

Ма есĕ тăмастăн халиччен? Тăр часрах! Хурчăка чĕпĕ тытаť. Хурчăка чĕпĕ тытаť! Ачасем выљаççĕ. Марйе, аťа выљама! Килĕр кунта! Качакасем килте-и? Ах, çав качакасене пĕрре! Хăвăртрах класа! Урок пуçланаť!

б) Кăшрăрулă пуплевсем хăвăрган çырса парăр.

*15-мĕш ĕç.* Ăнланса вуласа тухăр. Унтан çырса илĕр. Кирлĕ вырăна пăнчă йе кăшкăру палли лартăр.

## Икĕ паттăр.

Икĕ паттăр пулнă Пĕрре вĕсем ухутана кайнă Ухутара пĕри çырмана аннă

— Макар, кил кунта Упа тытрăм

— Илсе кил ăна кунта

— Илсе пыраймастăп

— Апла пулсан, ху кил кунта

— Йамасť, çисе йарасшăн

*16-мĕш ĕç.* Пур пуплевсене те вуласа тухăр. Вĕсене пурне те пĕр сасăпа вулатпăр-и?

| | | |
|---|---|---|
| Ваӊă килте. | Ваӊă килте-и? | Е, Ваӊă килте! |
| Шӳрпе тутлă. | Шӳрпе тутлă-и? | Ай-ай, шӳрпе тутлăçке! |
| Шыва кĕтĕмĕр. | Шыва кĕтĕмĕр-и? | Ну, шыва кĕтĕмĕр те! |
| Кашкăр пур. | Кашкăр пур-и? | Кашкăр пур! |
| Сысна пахчара. | Сысна пахчара-и? | Сысна пахчара! |

*17-мĕш ĕç.* 16-мĕш ĕçри ыйтулă пуплевсемпе кăшкăрулă пуплевсене пурне те вуласа тухăр. Унтан йулнă пуплевсене вуласа тухăр. Вĕсем ытти пуплевсенчен мĕнрен уйрăм?

> **Ыйтусăр, кăшкăрусăр пуплевсене**
> **калулă пуплев теççĕ.**
> **Калулă пуплев хыççăн пăнчă (.) лартаççĕ.**

7-мĕш ĕçре „Колхоз тăшманĕ“ йатлă статйара калулă пуплев миçе?

*18-мĕш ĕç.* Калулă пуплевсем тупса çырăр.

*19-мĕш ĕç.* Çак статйана вуласа тухăр. Унтан çырса илĕр. Çырса илнĕ чух кирлĕ вырăна йе пăнчă, йе ыйту палли, йе кăшкăру палли лартăр.

## Шкул пухăвĕнче.

Пухăва председатĕл уçрĕ

— Пурте пуçтарăнчĕç-и

Пурте Пурте

Уçăп председатĕле калать:

— Мана сĕнӳ тума йуратť-и

— Кала

— Епĕ малтан пирĕн класри йĕркесене пăхса тухма сĕнетĕп Унтан вара екскурçи çинчен сӳтсе йавма сĕнетĕп
— Тĕрĕс Тĕрĕс Екскурçи çинчен кайран
— Елĕр килĕшместпĕр Малтан екскурçи çинчен
— Есĕ мĕн ытла кăшкăран
— Мĕн çинчен тавлашаççĕ Епĕ нимĕн те илтеймерĕм
Председатĕл лăпланма хушать:
— Ан шавлăр, председатĕле итлĕр
Шавлама чарăнаççĕ

*20-мĕш ĕç.* **Хăвăр вулакан кĕнекерен калулă пуплев, ыйтулă пуплев, кăшкăрулă пуплев кашнине виçшер çырса илĕр.**

*21-мĕш ĕç.* **Çакăнта кирлĕ вырăна пăнчă, йе кăшкăру палли йе ыйту палли ларгса тухăр.**

## Хăлхасăр.

— Сывă-и, тăхлачă
— Пасара кайрăм
— Хăлхасăр-и мĕн есĕ, тăхлачă
— Автан сутрăм
— Сывă пул, тăхлачă
— Пилĕк тенкĕ сутрăм

*22-мĕш ĕç.* **Хăвăртан шухăшласа калулă, ыйтулă, кăшкăрулă пуплевсем пилĕкшер пуплев çырса парăр.**

# § 3. Мăшăр сăмахсем.

*23-мĕш ĕç.* **Статйана вуласа тухăр.**

## Колхозра.

Пурте ĕçре. Ача-пăча шкулра, йаçлĕре. **Тырă-пулă** çителĕклĕ. **Выљăх-чĕрлĕх** ăратлă, шултра. Вăл **сĕт-çу**, аш-какай нумай парать. **Кил-çурт** тирпейлĕ, таса, ăшă.

Выљăх-чĕрлĕх тесе епĕр мĕне-мĕне калатпăр?

Сĕт-çу тесе мĕне-мĕне калатпăр?

Выд ăх чĕрлĕх, сĕт çу, ача-пăча йышши сăмахсене <u>мăшăр сăмах</u> теççĕ.

Машăр с махсене кĕске йĕрпе сыпăçтарса çыраççĕ.

*24-мĕш ĕç.* а) Çакăнта тĕл пулакан мăшăр сăмахсене çырса илĕр.

Аçта-ăçта çитмерĕмĕр, мĕн-мĕн курмарăмăр пулĕ екскурçире! Кайăк ферминче чăх-чĕп, хур-кăвакал усраççĕ, чĕпписене машинăпа кăлараççĕ. Сысна ферминче сыснасем усраççĕ. Ватăрах сыснасем аран-аран утаççĕ. Сыснана ашĕшĕн усраççĕ.

Йалĕ хăйсен пысăк мар, утмăл-çитмĕл килрен ытла пулас çук. Çапах хăйсем хаçат-журнал пĕр утмăла йахăн илсе тăраççĕ.

Хăш чух тăман тапранса кайаť, айăн-çийĕн вĕçтерет, çулсене шăла-шăла лартаť. Уй-хире, çырма-çатрана йур вĕçтерсе тултараť.

Çырмара чул çинчен шыв шăнкăр-шăнкăр йухаť. Çăмăр пăт-пат ўккелерĕ те иртсе те кайрĕ. Йăтăсем лăй-лай харкашса илчĕç.

Шухăшламасăр пĕлнĕ-пĕлмен сăмаха персе ан йар.

б) Учитĕл кăтартса панă статйасенчи мăшăр сăмахсене çырса илĕр.

*25-мĕш ĕç.* а) Вуласа тухăр, туппине тупăр, çырса илĕр.

## Тупмали йумахсем.

Шăнкăр-шăнкăр туй килет, пĕр шăтăка кĕрех кайаť. Чăнкăр-чăнкăр чĕн йĕвен, лăппи-лаппи хур ури. Йалт-йалт пăхрăм, йуман хыçне пытантăм. Ши! кайрăм, пи! кайрăм, çўле кайрăм, çăмарта турăм. Атăл урлă лăпсăр-лапсăр упа каçаť. Пăнчăрт! шыва йатăм, путмарĕ.

Тупписем: Хăмла, кĕсле калани, кăвар туртни, утă çуни, çу, çиçĕм.

б) Хăврт шухăшласа мăшăр сăмахлă пуплевсем çырса парăр.

## § 4. Хытă уçă сасăсемпе çемçе уçă сасăсем.

*26-мĕш ĕç.* Уçă сасăсене каласа парăр.

Уçă сасăсем: **а, у, ы, ă, е, ӳ, и, ĕ.**

**Ы** сасăпа **и** сасса танлаштарса пăхăр: хăшĕ хытăрах, хăшĕ çемçерех илтĕнет? У сасăпа ӳ сасса танлаштарса пăхăр: вĕсенчен хăшĕ хытăрах, хăшĕ çемçерех илтĕнет?

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Хытă уçă сасăсем | **а** | **у** | **ы** | **ă** |
| Çемçе уçă сасăсем | **ĕ** | **ӳ** | **и** | **ĕ** |

Уçă сасăсене йĕркипе калама вĕренĕр: малтан хыттисене, унтан çемçисене калăр. Çырса илĕр: **а, у, ы, ă, е, ӳ, и, ĕ.**

*27-мĕш ĕç.* 23-мĕш ĕçри „Колхозра" йатлă статйана çырса илĕр. Хытă уçă саспаллисене айалган туртса тухăр; çемçе уçă саспаллисене икĕ хут туртăр.

Тата асăрхаса пăхăр-ха: çак статйара мĕнле уçă сасă тĕл пулмаст.

*28-мĕш ĕç.* Йăвăç йачĕсене çырса тухăр. Йăвăç йачĕсенче тĕл пулакан çемçе уçă сасăсене пурне те айалган туртăр, хыттисене каласа кăна тухăр.

## § 5. Хытă уçă сасăлă сăмахсемпе çемçе уçă сасăлă сăмахсем.

*29-мĕш ĕç.* Лаша—выљăх. Вĕрене—йăвăç. Сĕлĕ—тырă. Кăранташ—вĕренмели йапала. Шыв—шĕвĕ йапала. Чул—хытă йапала.

**Лаша** сăмахра уçă сасă миçе? Мĕнле-мĕнле уçă сасă? **Выљăх** сăмахра мĕнле-мĕнле уçă сасă? **Вĕрене** сăмахра?...

Асăрхăр: **Лаша** сăмахра уçă сасăсем пурте мĕнлисем? Хыттисем. **Выљăх** сăмахра уçă сасăсем пурте мĕнлисем? **Вĕрене** сăмахра? **Йăвăç** сăмахра? **Сĕлĕ** сăмахра?

| |
|---|
| **Пĕр сăмахра уçă сасăсем йе пурте хыттисем пулаççĕ, йе пурте çемçисем пулаççĕ.** |

Вăрман, курăк, шултăра—**хытă уçă сасăлă сăмахсем.**
Вĕрене, пилеш, симĕс—**çемçе уçă сасăлă сăмахсем.**

*30-мĕш ĕç.* 15-мĕшпе 16-мĕш ĕçри сăмахсем мĕнле: хăшĕ хытă уçă сасăлă, хăшĕ çемçе уçă сасăлă—çавсене кăтартса тухăр.

*31-мĕш ĕç.* Çырса илĕр. Тĕлме-тĕл пĕлтерĕшлĕ сăмахсене тупăр.

Тĕлме-тĕл пĕлтерĕшлĕ сăмахсем: чухăн—пуйан, вăйлă—вăйсăр, хытă—çемçе, хура—, пысăк—, çӳлĕ—, чăн—, ăшă—, тутă—, тутлă—, ватă—, типĕ—, çăра—, тури—, çурçĕрти—, тӳрĕ—, вăрăм.

Çырса пĕлтерсен, çемçе уçă сасăлă сăмахсене каласа парăр.

*32-мĕш ĕç.* Асăрхăр: **л, н, т** сасă хытă уçă сасăлă сăмахсенче мĕнле илтĕнет, çемçе уçă сасăлă сăмахсенче мĕнле илтĕнет?

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Тылă | ăна | калта | ытла | тат |
| Тилĕ | ĕне | килте | итле | тет |

**л, н, т сасă хытă уçă сасăлă сăмахсенче хытă илтĕнет, çемçе уçă сасăлă сăмахсенче çемçе илтĕнет.**

Çемçе уçă сасăлă сăмахсенче епĕр **л, н, т** саспаллисене çемçе паллисĕрех çемçе вулатпăр: килте, тенкел, темĕн, пит, ӳт, хĕрлĕ, кĕрен.

*33-мĕш ĕç.* Хăвăртан çирĕм çемçе уçă сасăлă сăмах тупса çырса парăр, **л, н, т** саспаллисене айалтан туртăр.

# § 6. Љ, Њ, Ť саспаллисене çырасси.

*34-мĕш ĕç.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| Љава | кукăљ | хураť | тармасť |
| выља | мăкăњ | лараť | лармасť |
| лере | кĕсел | килет | килмест |
| киле | пирĕн | ӳкет | ӳкмест |

Асăрхăр: Çакăнти çӳлти ĕретри сăмахсем мĕнле: хытă уçă сасăлă-и, çемçе уçă сасăлă-и? Айалти ĕретри сăмахсем мĕнле?

Хытă уçă сасăлă сăмахсенче паллă тунă сасăсем мĕнле илтĕнеççĕ? Љ, Њ, Ť, саспаллисене мĕнле сăмахсенче çырнă?

Çемçенĕн илтĕнеççĕ пулсан та, çемçе уçă сасăлă сăмахсенче мĕнле саспалли çырнă: љ, њ, ť йе л, н, т?

---

**Љ, Њ Ť саспаллисене хытă уçă сасăлă сăмахсенче çыраççĕ: Љава, выљăх, кукăљ, ахаљ, мăкăњ, супăњ, аťа, ťыха, лараť, лармасť.**

**Çемçе уçă сасăлă сăмахсенче Л, Н, Т çыраççĕ: тенкел, тилĕ, килет, килмест, ӳкет, ӳкмест.**

---

**Хăш сăмахра хытă уçă сасă та, çемçе уçă сасă та пулма пултараť. Ун пек сăмахсенче Л, Н, Т çемçе илтĕнсен, хытă уçă сасăлă татăкра Љ, Њ, Ť çыраççĕ; çемçе уçă сасăлă татăкра Л, Н, Т çыраççĕ: и-йуњ, и-йуљ, çенťа-бĕр, ок-ťа-бĕр, ре-во-љу-ци, куљ-ту-рă, И-љуш, Уљ-ки, Ťи-хăн, Ли-сук, тех-ни-кă, кро-лик, про-ле-та-ри.**

*35-мĕш ĕç.* а) Çак пуплевсене çырса илĕр. Çемçе уçă сасăлă сăмахсенчи л, н, т саспаллисене айалтан туртăр.

Ир тăнă кайăк выçă вилмен, тет.
Ĕçрен ан хăра, вăл хăй санран хăратăр.
Алă ĕçрен хăрамасť.
Халăх сураť—кӳлĕ тăваť, пĕччен сураť—типсех пыраť.
Ĕмĕр пурăн, ĕмĕр вĕрен.
Алă-ура тĕрĕс çинче ĕçсĕр ларни килĕшмест.

---

Кам ĕçлемест, çавă ан çитĕр.

Пирĕн Совет сойузĕнчи ĕç вăл мухтавлă, чыслă, паттăрлă, чаплă.

б) Тырă йачĕсене, пахча çимĕçĕ йачĕсенче тĕл пулакан çемçе уçă сасăлă сăмахсене тупса çырса парăр.

*36-мĕш ĕç.* а) Љ саспаллилĕ хытă уçă сасăлă сăмахсем тупса çырса парăр.

б) Ҥ саспаллилӗ хытӑ уҫӑ сасӑлӑ сӑмахсем тупса ҫырса парӑр.

в) Ӗ саспаллилӗ хытӑ уҫӑ сасӑлӑ сӑмахсем тупса ҫырса парӑр.

# § 7. Сыпӑклӑ сӑмахпа сыпӑксӑр сӑмах.

*37-мӗш ӗҫ.* а) Ҫак статйана вуласа тухӑр.

## Кӳлӗ.

Пирӗн патӑрта пӗр кӳлӗ пур. „Ҫутӑ кӳлӗ" теҫҫӗ ӑна. Йалти **пулӑҫӑсем** унта **пулӑ** тыткалаҫҫӗ. Анчах **пулли** пит сахал. Халӗ „Ҫутӑ кӳлӗ" колхоз аллинче. Колхоз ыйтнипе кӳлле пӗр **пулӑ** ӗҫне вӗреннӗ ҫын килсе пӑхрӗ. Ку **пулӑсӑр** кӳлӗрен нумай **пулӑлӑ**, тата хаклӑ **пулӑлӑ** кӳлӗ тума пулат, терӗ **пулӑ** ӑсти.

| | |
|---|---|
| б) Пулӑ<br>Пулӑ-ҫӑ<br>Пулӑ-лӑ<br>Пулӑ-сӑр | **Пулӑҫӑ** мӗнле сӑмахран пулнӑ? Мӗнле сыпӑк хушӑннӑ? **Пулӑлӑ** мӗнле сӑмахран пулнӑ? Мӗнле сыпӑк хушӑннӑ? **Пулӑсӑр?** Хӑшӗ кунта сыпӑклӑ сӑмах? Хӑшӗ сыпӑксӑр? |

**Хуҫалӑх** мӗнле сӑмахран пулнӑ? **Хаклӑ? Ӑслӑ? Кайат? Кайаҫҫӗ?**

**Куҫ** мӗнле сӑмах: сыпӑклӑ-и, сыпӑксӑр-и? **Ӗҫ** мӗнле сӑмах? **Куҫлӑх? Ӗҫле? Ҫыру? Ҫырас? Ҫыратӑп?**

> **Пулӑ, куҫ, ӗҫ, ҫыр**—сыпӑксӑр сӑмахсем, сӑмах тӗпӗсем.
> **Пулӑҫӑ, куҫлӑх, ӗҫле, ҫыру**—сыпӑклӑ сӑмахсем.
> **Ҫӑ, лӑ, сӑр, ле, у**—сӑмах сыпӑкӗсем.

*38-мӗш ӗҫ.* Ҫак сӑмахсен тӗпне, сыпӑкне кӑтартса парӑр. Ҫырса илнӗ чух сыпӑкӗсене кӗске йӗрпе уйӑрса ҫырӑр.

Ҫыру, ҫырсан, ҫырнӑ, ҫыратӑп, ҫырӑп.
Ӗҫле, ӗҫлӗ, ӗҫсӗр, ӗҫпе, ӗҫе, ӗҫрен.
Шывлӑ, шывсӑр, шыври, шыва, шывран.
Тимӗрҫӗ, тимӗрлӗ, тимӗрпе, тимӗртен.
Кӗнекене, кӗнекере, кӗнекесем, кӗнекери.
Урампа, урамра, урамсем, урамри.

Куратăп, курнă, курăт, курсан, курмала.
Ларатăп, ларнă, ларăт, ларсан, лармала.
Пуслăх, куçлăх, ларчăк, хырчăк, шанчăк.

*39-мĕш ĕç.* Хăвăртан шухăшласа сыпăксăр сăмах вуннă таран, сыпăклă сăмах вунпилĕк таран çырса парăр.

*40-мĕш ĕç.* Çак сăмахсенчен сыпăклă сăмахсем туса парăр. Кашни тĕпрен темиçе сыпăклă сăмах тăвăр.

Пуç. Мăй. Ăс. Вăй. Лаша. Лар. Тух. Кĕт. Çит. Ӳкер.

*41-мĕш ĕç.* а) Асăрхăр: Сăмах тĕпĕ çемçе уçă сасăлă пулсан, сыпăкĕ мĕнле пулăт? Тĕпĕ хытă уçă сасăлă пулсан, сыпăкĕ мĕнле пулăт.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Пулă-**çă** | лаша-**лă** | лаша-**па** | кай-**атăп** | кай-**сан** |
| Тимĕр-**çĕ** | ĕне-**лĕ** | ĕне-**пе** | кил-**етĕп** | кил-**сен** |
| Пахча-**çă** | çĕçĕ-**лĕ** | çĕçĕ-**пе** | лар-**атăп** | лар-**сан** |

**Сăмахра, тĕпĕ хытă уçă сасăлă пулсан, сыпăкĕ те хытă уçă сасăлă пулăт; тĕпĕ çемçе уçă сасăлă пулсан, сыпăкĕ те çемçе уçă сасăлă пулăт.**

**Хăш сыпăк йалан çемçе уçă сасăлă пулăт:**

| | | | |
|---|---|---|---|
| лаша-**сем** | лаша-**сен** | хура-**скер** | кайнă-**ччĕ** |
| сурăх-**сем** | сурăх-**сен** | шурă-**скер** | кай-**ччĕ** |
| ĕне-**сем** | ĕне-**сен** | хĕрлĕ-**скер** | кил-**ччĕ** |
| кĕлет-**сем** | кĕлет-**сен** | вĕтĕ-**скер** | çук-**чĕ** |

б) Сăмахсем çумне сыпăкĕсене тупса çыпăçтарса çырса парăр.
Вăрман, улăх, кил, пӳрт, кĕпе, тăв, ил, лаша, ĕне, лар, çит.
Сыпăкĕсем: ра, та, ре, те, атăн, лĕх, етĕп, нăн, нĕн, тăм, рĕм.

*42-мĕш ĕç.* а) Çакăнти пĕр майлă пуплевсен уйрăмлăхне кăтартса парăр.

| Пĕррелĕ хисеп. | Нумайлă хисеп. |
|---|---|
| Лаша чуп-ăт. | Лаша-сем чуп-аççĕ. |
| Пулă иш-ет. | Пулă-сем иш-еççĕ. |
| Кайăк вĕç-ет. | Кайăк-сем вĕç-еççĕ. |
| Ача упален-ет. | Ача-сем упален-еççĕ. |

**Сем** сыпăк мĕне пĕлтерет? **Аççĕ, еççĕ** сыпăк мĕне пĕлтерет? **Ат̆, ет** сыпăк мĕне пĕлтерет?

1. Лаша, пулă, чупат̆, ишет—пĕррелĕ хисепри сăмахсем.

Лашасем, пулăсем, чупаççĕ, ишеççĕ—нумайлă хисепри сăмахсем.

2. **Сем** сыпăк йапала нумаййине пĕлтерет: лашасем, кайăксем, ачасем, пулăсем.

3. **Аççĕ, еççĕ** сыпăк ĕçе нумайăн тунине пĕлтерет: лашасем чупаççĕ, кайăксем вĕçеççĕ.

4. **Ат̆, ет** сыпăк ĕçе пĕччен тунине пĕлтерет: лаша чупат̆, кайăк вĕçет, пулă ишет.

б) Çак пуплеври сăмахсене пĕррелĕ хисепрен нумайлă хисепре туса çырса парăр. Нумаййине пĕлтерекен сыпăксене айалтан туртăр.

Тилĕ чăхăсене тытат̆.
Мулкач йăвăç кăшлат̆.
Аслă çулпа лав пырат̆.
Çуркунне шыв вăйлă йухат̆.
Лаша улăхра çӳрет.
Кашкăр вăрманта пурăнат̆.
Ача шкултан киле таврăнат̆.
Пионер тасана йуратат̆.
Йалта пуху пулат̆.

*43-мĕш ĕç.* Çак пуплевсенче **ат̆, ет,** тата **маст̆, мест** сыпăксем мĕне пĕлтернине асăрхăр.

**Пĕррелĕ хисеп.**

| | |
|---|---|
| Иван ларат̆. | Иван лармаст̆. |
| Йакку килет. | Йакку килмест. |
| Петĕр çырат̆. | Петĕр çырмаст̆. |

**Нумайлă хисеп.**

| | |
|---|---|
| Лашасем чупаççĕ. | Лашасем чупмаççĕ. |
| Çынсем пухăнаççĕ. | Çынсем пухăнмаççĕ. |
| Кайăксем килеççĕ. | Кайăксем килмеççĕ. |

**Ат, ет, аççĕ, еççĕ** сыпăксем ĕç пулнине пĕлтереççĕ: тăват, тăваççĕ, чупат, чупаççĕ.

**Маст, мест, маççĕ, меççĕ** сыпăксем ĕç пулманнине пĕлтереççĕ: тумаст, тумаççĕ, чупмаст, чупмаççĕ.

| |
|---|
| Хытă уçă сасăлă сăмахра ат, маст çыраççĕ. Çемçе уçă сасăлă сăмахра ет, мест çыраççĕ. |

*44-мĕш ĕç.* а) Малали пуплевсенче, пĕлтерĕшне пăхса, пăнчă вырăнне **ат, ет** йе **маст, мест** çырăр.

Çын кур..., илт..., çӳре..., ӳс...; йăвăç ӳс..., анчах кур..., илт..., çӳре... . Йăвăç ӳс..., хуна...; чул ӳс..., хуна...

Пионер пур ĕçе те вăхăтра тăв... Пионер тирпейлĕхшĕн кĕреш... Пионер чĕлĕм турт... Пионер ĕçлеме ӳркен...

б) Çав пуплевсенчи сăмахсенех нумайлă хисепре туса çырăр: кирлĕ вырăна сем сыпăк, **аççĕ, еççĕ** йе **маççĕ, меççĕ** сыпăк çырăр.

*45-мĕш ĕç.* а) Çакăнти паллă тунă сăмахсене хăçан калаççĕ?

Пичче хулана **кайиччен** йур çурĕ.
Пичче хулана **кайсассăн** йур çурĕ.
Пичче хулана **каймассерен** кино курат.

Хăш сăмах кунта хыççăн пулнине пĕлтерет? Хăшĕ умĕн пулнине пĕлтерет? Хăшĕ кашнинче пулнине пĕлтерет?

| Умĕн: | Хыççăн: | Кашнинче: |
|---|---|---|
| **куриччен** | **курсассăн** | **курмассерен** |
| **киличчен** | **килсессĕн** | **килмессерен** |
| **лариччен** | **ларсассăн** | **лармассерен** |
| **çитиччен** | **çитсессĕн** | **çитмессерен** |

**Иччен** сыпăкра икĕ **ч** çыраççĕ: кайиччен, киличчен.
**Сассăн** сыпăкра икĕ **с** çыраççĕ: кайсассăн, килсессĕн.
**Массерен** сыпăкра икĕ **с** çыраççĕ: каймассерен, килмессерен.

б) Иччен сыпăклă сăмах 6 çырăр.
Сассăн, сессĕн сыпăклă сăмах 6 çырăр.
Массерен, мессерен сыпăклă сăмах 6 çырăр.

*46-мĕш ĕç.* Çак пуплевсене пăнчăсем вырăнне кирлĕ сыпăксене лартса çырса илĕр.

Ачасем çырмана кай... шыва кĕреççĕ. Плуг таврашне акана тух... хатĕрле. Хĕвел тух... тин хулана çитрĕмĕр. Тăрăшса ĕçле... ку ĕçе касчен пĕтеретпĕр. Çывăрма вырт... лап 10 сехет çапрĕ. Куçма иртĕннипе çыр... тетраҫне варалаҫ. Тимлесе ĕçле... ĕç ăнаҫ. Йăвăр ĕçе тух... лашусене лайăхрах тăрантар.

*47-мĕш ĕç.* а) Кунта епĕр мĕнле сыпăк куратпăр? Вăл мĕне пĕлтерет? Ăна йепле çырмала?

Пайан пуху тумала. Çурхи ĕçсене хатĕрленмеле. Пахча çинчен сӳтсе йавмала.

| |
|---|
| **Мала, меле** сыпăк кирлине, тумалине, пулмалине пĕлтерет.<br>**Мала, меле** сыпăкра Л саспалли пĕрре кăна çырмала. |

б) Пăнчăсем вырăнне мала йе меле сыпăк çырăр.

Кĕнекене васкамасăр вула... Вуланине тĕплĕрех ăнлан... Ăнланман вырăнсем, пĕлмен сăмахсем çинчен вĕрентекенрен йе пĕлекен йулташран ыйт... Кĕнекене тирпейлĕ тыт..., листисене чĕрсе кăлар... мар. Кĕнекери картинсене те ăнланма пĕл..., вĕсене пăс... мар. Кĕнекене вырăнне ху...

в) „Пахча ĕçне мĕнле тумала“ йатлă статйа çырса парăр. Унта пĕр 5–6 пуплев пултăр. Кашни пуплевре **мала, меле** сыпăклă сăмах пултăр.

*48-мĕш ĕç.* а) Çак пуплевсене çырса илĕр. Кунта мĕнле сыпăк хушăнаҫ? Вăл мĕне пĕлтерет?

## Мĕнпе ĕçлеççĕ.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Куçпа | кураççĕ. | ... | касаççĕ. |
| ... | илтеççĕ. | ... | хыраççĕ. |
| ... | калаçаççĕ. | ... | шăлаççĕ. |
| ... | шăршлаççĕ. | ... | саваласçĕ. |
| ... | утаççĕ. | ... | çулаççĕ. |
| ... | ĕçлеççĕ. | ... | тылласçĕ. |
| ... | чĕреççĕ. | ... | переççĕ. |

**Па, пе сыпăклă сăмах ĕçе мĕнпе тунине, мĕнле хатĕрпе ĕçленине пĕлтерет.**

**б) Пăнчăсем вырăнне мĕнпе тесе ыйтакан сăмаха лартăр.**

... çуран çӳреççĕ.
... утланса, кӳлсе çӳреççĕ.
Вутта ... турттараççĕ.
Тавара ..., ..., ... турттараççĕ.
Шупашкартан Канаша ..., ... çӳреççĕ.
Канашран Мускава ... кайаççĕ.
Çула Атăл çинче ... çӳреççĕ.
Сывлăш çинче ... çӳреççĕ.

Лаша; ура; аероплан; çара çуна; çуна, урапа, грузовик; пăрахут; автобус, автомобил; пуйăс.

*49-мĕш ĕç.* а) **Пăнчăсем вырăнне кирлĕ сăмахсене лартăр. Ăн, нăн, сыпăклă сăмах мĕне пĕлтернине асăрхăр.**

## Тĕрлĕ хӳтлĕх.

Кашкăрăн хӳтлĕхĕ—шăлĕпе чĕрни. Кушакăн—... Ĕненĕн—... Пăланăн—... Тиллĕн—... Качаканăн—... Чĕрĕпĕн—... Тимĕр шапанăн—... Ăмăрт кайăкăн—... Пыл хурчĕн—... Етемĕн—тĕрлĕ хатĕр, хĕç-пăшал, ăс-тăнĕ.

Мăйраки, шăлĕпе чĕрни, йĕппи, хуранĕ, сăмсипе чĕрни, шăлĕпе хӳри, сăнни.

**Ăн, нăн (ĕн, нĕн) сыпăклă сăмах пĕр-пĕр йапала камăннине пĕлтерет.**

**б) Пилĕк пуплев çырса парăр. Унта кашнинче камăннине, мĕнĕннине кăтартакан сыпăклă сăмах пултăр.**

Тĕслĕхсем: Кушак—шăшийĕн тăшманĕ. Васлейĕн хĕрлĕ кăранташ пур. Пыл хурчĕн висĕ мăшăр ура.

*50-мĕш ĕç.* а) **Пăнчăсем вырăнне кирлĕ сăмахсене лартăр. Мĕнле сыпăклă сăмах пулнине, ун пек сăмах мĕне пĕлтернине асăрхăр.**

## 1. Кам ăçта пурăнать.

Етем—пӳртре. Лаша—витере. Пакша ... Пулă... Пыл хурчĕ ... Шăши ... Ача ... Кайăк чĕппи ... Упа ... Кăткă ...

## 2. Кам ăçта ĕçлет.

Рабочи савăтра ĕçлет. Колхозник ... Хресчен ... Учитĕл ... Служăшчи ... Çекретар ... Кăмрăк кăларакан шахтӳор ... Комсомолĕс ... Пионер ... Агроном ...

## 3. Ăçта ӳсет.

Ыраш—хирте. Кишĕр— ... Çăка— ... Улмуççи— ... Карас— ... Шăнкăрч чĕппи— ... Сысна çури— ... Чечек— ... Кăмпа— ...

**Ра, та (ре, те) сыпăклă сăмах ăçта пурăннине, ăçта ĕçленине, ăçта пулнине кăтартаӳ.**

б) Кам ăçта пурăнни, ăçта ĕçлени, ăçта тăни, пулни çинчен 8 пуплев çырса парăр. Сыпăкĕсене айалтан туртăр.

*51-мĕш ĕç.* а) Пăнчăсем вырăнне кирлĕ сăмаха йе сыпăкне лартăр. Мĕнле сыпăк хушăннине, вăл мĕне пĕлтернине асăрхăр.

## 1. Мĕнрен тăваççĕ.

Çăкăра çăнăхран тăваççĕ. Сăхмана тăларан. Кĕрĕке ... Çĕççе ... Пӳрте ... Уçлам çăва ... Турчăкана ... Атта ... Кĕнекене ... Перона ... Çипе ... Йĕпе ... Пурта ...

## 2. Ăçтан тухаççĕ.

Ачасем клас... тухрĕç. Пыл хурчĕ вĕлле... вĕççе тухрĕ. Вутта вăрман... турттараççĕ. Район... техник килет. Ачасем хула... тавăрăнаççĕ. Сурăхсем карта... тухрĕç.

**Мĕнрен тунине, ăçтан тухнине кăтартма сăмах çумне ран, тан (рен, тен) сыпăк хушăнаӳ.**

б) Мĕнле йапаларан мĕн туни çинчен 5 пуплев çырса парăр.

в) Пилĕк пуплев çырса парăр. Унта кашнинче **ăçтан** тесе ыйтăнакан сăмах пултăр.

*52-мĕш ĕç.* Çак пуплевсене çырса пĕтерĕр.

а) Ачасем хулана ...
Ачасем хулара ...
Ачасем хуларан ...
Хуланăн урамĕ ...

б) Рабочисем савăта ...
Рабочисем савăтра ...
Рабочисем савăтран ...
Савăтăн трупи ...

в) Вăрмана çитрĕç. ... ĕçлеççĕ. ... тухаççĕ. ... пыраççĕ.

г) Шывпа ... Шыва ... Шывра ... Шывран ...

*53-мĕш ĕç.* а) Çак сăмахсен пĕлтерĕшĕсене ăнланса илĕр.

| | | |
|---|---|---|
| Вăйлă лаша | картинлă кĕнеке | пулăлă кӳлĕ |
| Вăйсăр лаша | картинсăр кĕнеке | пулăсăр кӳлĕ |

**Лĕ, лĕ** сыпăк пуррине пĕлтерет.

**Сăр, сĕр** сыпăк çуккине пĕлтерет.

б) **Лă, лĕ** сыпăкра йалан пĕр **л** çырмала: ăслă, сыпăклă, лашалă, кĕнекелĕ, çăкалă, вĕренелĕ.

в) **Лă, лĕ** сыпăклă сăмах çиччĕ çырăр. **Сăр, сĕр** сыпăклă сăмах саккăр çырăр.

**Лă, лĕ** сыпăклă сăмахсем:

**Сăр, сĕр** сыпăклă сăмахсем:

*54-мĕш ĕç.* а) Пĕлтерĕшне пăхса, пăнчăсем вырăнне йе **лă, лĕ** сыпăк çырăр, йе **сăр, сĕр** сыпăк çырăр.

Чĕлхе... çынсем алăпа кăгартса калаçаççĕ. Куç... çынна суккăр теççĕ, ăс... çынна ухмах теççĕ. Сахал пулă... кӳлĕрен нумай пулă... кӳлĕ тăвар. Ĕç вăхăгĕнче чипер алă-ура... çынна ĕç... ларма намăс. Есĕ кампа тус...? Икĕ сăмса..., икĕ куç... (Хачă). Ирхине тăватă ура..., кăнтăрла икĕ ура..., каçхине виçĕ ура... (Çын ĕмĕрĕ). Алă.., ура... кĕпе тăхăнаĭ (Тӳшек).

б) Кăмăллă, пыллă, шăллă, ăссăр, туссăр, пăссăр сăмахсенче варринче мĕншĕн икшер **л** йе икшер **с** çырнă?

# § 8. Ç, Ч, Ť сасăсем хăш йунашар сасăсене çемçетни.

*55-мĕш ĕç.* а) Ç, ч, ť сасăсем çемсе илтĕнеççĕ, çавăнпа вĕсене çемçе хупă сасă теççĕ.

б) Çырла, çыхас, чышкă, чыхăнас, ťыха. Çак сăмахсем хытă уçă сасăлă-и, çемçе уçă сасăлă-и? Кунта **ç, ч, ť** хыççăн **ы** сасă мĕнле илтĕнет? Çырасса мĕн çыраççĕ?

> **Хытă уçă сасăлă сăмахра Ç, Ч, Ť хыççăн Ы сасă çемçелет, И сасă майлă илтĕнет. Çырасса Ы çыраççĕ.**

в) Çак тĕслĕхсене çырса илĕр.

Çывăр, çывăх, çын, çыпăç, çыр, çыру, çыран, çырма, çырт, çых, çыхăну, чыш, чышкă, чыс, чысла, ҫ̌ыха.

г) Пуплевсем туса парăр. Унта çак сăмахсем пулччăр. (Ытти сăмахсем те пулма пултараççĕ).

Çыру, конверт, çыпăçтар. Ҫ̌ыха, улăх, çаран. Çынсем, çырма, чул, шкул. Епĕр, шеф, çыхăну. Чавса, çывăх, çырт.

*56-мĕш ĕç.* а) Калча, шалча, мунча, çулçă. Ку сăмахсем мĕнле: хытă уçă сасăлă-и, çемçе уçă сасалă-и? Ку сăмахсенче **л, н** сасăсем **ч, ç** сасăсем умĕн мĕнле илтĕнеççĕ? Çырасса мĕн çыраççĕ?

**Хытă уçă сасăлă сăмахра Ч, Ç сасăсем умĕн Л, Н сасăсем çемçенĕн илтĕнеççĕ. Çырасса Л, Н çыраççĕ.**

б) Çак сăмахсенче **л, н** сасăсем мĕнле илтĕнеççĕ? Çырасса мĕн çырмала? Вĕсене çырса илĕр.

Шанчăк, пăнчă, пакăлча, пылчăк, анчах, пулчĕ, кулчĕ, канчĕ, тунчĕ.

в) Çак сăмахсенчен пуплевсем туса парăр. (Ытти сăмахсем те пулма пултараççĕ).

Хĕл, мунча, çу тата шыв. Калча, выҫ̌ăх, ан. Хурăн, çулçă, тух, вăрман, илем. Пуплев, пăнчă, хыççăн.

# § 9. Вăрăмăн илтĕнекен сасăсене çырасси.

*57-мĕш ĕç.* **Сасă вăрăмăн илтĕнсен, икĕ саспалли çыраççĕ: атте, анне, вуннă, аванни.**

*58-мĕш ĕç.* а) Вăрăмăн илтĕнекен сасăсене тĕрĕс çырма хăнăхăр (диктовкă).

Çуртăри уйĕнче пултăмăр: сĕлли симĕс, урпи пулса çитнĕ, вырмала. Карaçăмăн атти тăвăр: урине хĕсет.

Шкапра тĕрлĕ кĕнеке: çĕнни те сахал мар, кивви те нумай. Утă пурте пĕр мар: вĕтти, çемçи лайăхрах; шултăри, хытти начар.

Килхушшинче лашасем уçăлса çÿреççĕ. Мăнтăр çутă кĕлеткисем куçа илĕртеççĕ. Хури, кăвакки, турри—пур тĕсли те пур. Çамрăккисем, ваттисем, йупах ҫ̌ыхи те пур.

б) Малали сăмахсенче и умĕнчи хупă сасса иккĕлетсе çырăр.

Тырă—тырри, тылă—тылли, пăтă—, пĕкĕ—, тупă—, çӳпĕ—, сăвă—, çĕçĕ—, тĕкĕ—, çакă—, усă—.

в) Малали сăмахсенче и умĕн икĕ пĕр пек хупă сасă çырăр.

Ватă—ватти, чĕрĕ—, йӳçĕ—, шурă—, сарă—, сивĕ—, ăшă—, хытă—, хӳтĕ—, уçă—, çĕнĕ—, кивĕ—.

г) Малали сăмахсенче и умĕн икĕ хупă сасă çырăр.

Пысăк—пысăкки, пĕчĕк—пĕчĕкки, нумай ..., сахал ..., çирĕп ..., тăвăр ..., ăссăр ..., хăлхасăр ..., лайăх ..., лайăхрах ..., пысăкрах ....

*59-мĕш ĕç.* а) Епĕ çула час-часах шыва кĕреттĕм. Епĕ хутсенчен хачăпа касса лашасем тăваттăм.

**Аттăм, еттĕм** сыпăк ĕлĕк пулнине пĕлтерет.

**Аттăм, еттĕм** сыпăкра ик т çыраççĕ.

б) Малали сăмахсене çырса парăр.

Пар—параттăм, ил—илеттĕм, кĕр..., лар..., чуп..., шăвар..., выр..., пуçтар..., йăт..., купала..., çап..., хут..., çур....

в) Малали статйиана çырса илĕр. **Епĕ** вырăнне **есĕ** çырăр; **аттăм, еттĕм** сыпăк вырăнне **аттăн, еттĕн** çырăр.

## Ача чухнехи.

Епĕ пĕчĕк чухне çырмаран тăм илсе килеттĕм те пӳрт тăваттăм. Пӳрт ăшне кăмакине тăваттăм, пуканесем, пукансем туса хураттăм. Йĕри-тавра хӳме çавăраттăм. Ах, хам хĕпĕртеттĕм!

*60-мĕш ĕç.* **Чĕ** сыпăк мĕне пĕлтернине, ăна йепле çырнине асăрхăр.

| | |
|---|---|
| Пирĕн вăкăр пур. | Вăкăр картара выртать. |
| Пирĕн вăкăр пурччĕ. | Вăкăр картара выртатьчĕ. |
| аван—аванччĕ | вулать—вулатьчĕ |
| лайăх—лайăхчĕ | вуламасть—вуламастьчĕ |

1. **Чĕ** сыпăк хальхи умĕн пулнине, ĕлĕк пулнине пĕлтерет: пурччĕ, çукчĕ, кайатьчĕ, кайнăччĕ.

Хăш сăмахсенче **чĕ** сыпăк тăвас килнине те пĕлтерет: кайĕччĕ, вулĕччĕ, кайасчĕ, тумалаччĕ, илмелеччĕ.

2. Уçă сасăсем хыççăн, тата **й, р, л, н, м, в** **хупă сасăсем хыççăн чĕ сыпăкри ч вăрăмланаҫ: епĕччĕ, вăлччĕ, каймалаччĕ, парччĕ.**

*61-мĕш ĕç.* Çак сăмахсем çумне чĕ сыпăк хушса çырăр. Пĕр ч йе икĕ ч çырмалине асăрхăр.

Курĕ, килĕ, çитĕ, каймала, васкамала, çитмеле, кайас, килес, çитес, пар, кил, çи, çит, вулаҫ, вула, çӳрет, çӳре, çырмаҫ, килмест, тухмаҫ.

*62-мĕш ĕç.* Çак пуплевсене ĕлĕк пулнă пек туса çырса илĕр.

Т ĕ с л ĕ х: Пирĕн йалта пĕр çын пур выранне Пирĕн йалта пĕр çын пурччĕ тесе çырăр.

Пирĕн йалта пĕр çын пур. Йачĕ унăн Уçăп. Унăн пĕр вăкăр пур. Вăл пит усал, никама та иртермест, куракана тĕкет.

Пирĕн пурăнăç çапла: виçĕ пусулă уй, пĕччен хуçалăх, машинă тавраш̆ĕ çук, навус та çук. Çавăнпа тырă начар пулаҫ, çиме те çитмест.

*63-мĕш ĕç.* Çакăнта пăнчăсем вырăнне чĕ сыпăк хушса çырса илĕр. Малтан ĕлĕк пулнине пĕлтерекен пуплевсене, унтан тăвас килнине пĕлтерекен пуплевсене çырса илĕр.

Тĕттĕм пуличчен киле çитес... Август уйăхĕ пĕтет пулсан та, хĕвел хытă хĕртет... Сĕлле ир акмала..., ĕлĕкхи йăлана пăрахмала... Манăн икĕ кĕнеке... Çанталăк ăшă тăраҫ... Манăн хуçмала çĕçĕ пур... Вăл пит çивĕчĕ..., кăранташсене пит аван шĕвĕртет... Кишĕре çăра акмала мар... Малашне ăна сайрарах акас... Пирĕн сатра улмуççисем ватă..., улмисем тутлă мар...

*64-мĕш ĕç.* а) Хисеп йачĕсене мĕнле çырнине асăрхăр.

Пĕрре—пĕр кило, иккĕ—икĕ кило, виççĕ—виçĕ кило, тăваттă—тăвата кило, пиллĕк—пилĕк кило, улттă—ултă кило, çиччĕ—çичĕ кило, саккăр—сакăр кило, тăххăр—тăхăр кило, вуннă—вунă кило.

**Йапала йачĕсĕр каласан, вуннăччен хисеп варринчи хупă сасă вăрăмланаҫ. Хыççăн йапала йатне каласан, вăрăмланмаҫ.**

б) Çак хисеп йачĕсене сăмахпа çырса парăр.

22, 33, 44, 55, 66, 77, 88, 99, 101, 110, 125, 178.

9 кило, 8 метр, 5 литр, 6 центнĕр, 2000 грам, 4 километр, 3 тенкĕ, 15 пус.

# § 10. С сасă Ш пек йе Ç пек илтĕнни.

*65-мĕш ĕç.* а) **с** сасă, **ш** сасăпа йунашар пулсан, **ш** пек илтĕнет; **ç** сасăпа йунашар пулсан, **ç** пек илтĕнет. Çырасса çапах **с** саспалли çыратпăр.

| Калатпăр: | Çыратпăр: | Калатпăр: | Çыратпăр: |
|---|---|---|---|
| пилешшем | пилешсем | леççе | леçсе |
| пилешшĕр | пилешсĕр | курашшăн | курашсăн |
| куççем | куçсем | кĕрешше | кĕрешсе |

б) Чăрăш, йулташ, чăваш, аташ, куç, пуç, лаç, каç сăмахсем çумне сем сыпăк хушса çырăр. Мĕнле илтĕннине асăрхăр.

в) Пиç, хирĕç, калаç, куç, паллаш, тавлаш, тупăш, хуралаш сăмахсем çумне **са** йе **се** сыпăк хушса çырăр. Мĕнле илтĕннине асăрхăр, тĕрĕс çырса хурăр.

г) Чĕрес, карас, лупас, турпас, илес, кайас, килес, тăвас курас, ĕçлес çумне **шăн** сыпăк хушса çырăр. Мĕнле илтĕннине асăрхăр, тĕрĕс çырса хурăр.

# § 11. Б, г, д, ж, з сасăсем.

*66-мĕш ĕç.* Б—п, д—т, г—к, ж—ш, з—с сасăсем йепле илтĕннине танлаштарса пăхăр.

| | | | |
|---|---|---|---|
| авто**б**ус | у**д**арник | **Д**он | бур**ж**уй |
| **п**ус | **т**ырă | **т**ан | **ш**ыв |
| бри**г**адă | гру**з**овик | **Б**ыкăв | **Ж**урављов |
| **к**анаш | **с**ава | **п**ыр | **ш**ур |

**Б, г, д, ж, з** сасăсем йанăраса илтĕнеççĕ, вĕсене йанăракан сасăсем теççĕ.

**П, к, т, ш, с** сасăсем йанăрамаççĕ, вĕсене йанăраман сасăсем теççĕ.

**Б, г, д, ж, з** сасăсем чăваш чĕлхишĕн çĕнĕ сасăсем. Вĕсене пурте тĕрĕс калаймаççĕ-ха. Вĕсене тĕрĕс калама, тĕрĕс çырма вĕренмеле.

*67-мĕш ĕç.* Çын йачĕсене, хушамачĕсене çакăн пек çырма вĕренĕр.

Андрейĕв Иван
Борисăв Çемйон
Васçилйĕв Йегор
Григорйĕв Çтепан
Данилăв Оçип
Йефимăв Трофим
Журављов Никитă
Зайцĕв Николай
Иванов Павĕл
Коçтин Михаил
Лебĕдĕв Платон
Михайлăв Тимофей
Николайĕв Лука
Оçипăва Олљгă
Петровă Иринă
Романăва Верă
Çидăрăв Алексçей
Тимофейĕв Михаил
Уçтинăв Владимир
Филипăв Çергей
Харитонăв Çпиридон
Цыганов Кирил
Чупраков Тихăн
Шашкин Йефрем
Йурйĕв Борис
Йакăвлĕв Денис

*68-мĕш ĕç.* а) Çак статйари айалтан туртнă сăмахсене çырса илĕр.

## Пирĕн тăшмансемпе туссем.

Совет сойузĕнчи рабочисемпе хресченсем, коммуниссен партийĕ тĕрĕс йертсе пынипе, социалисăм тăваççĕ. Епĕр пĕрремĕш пйатилеткăна ытлашшипех тултартăмăр. Пирĕн халĕ пысăк савăтсем, комбинатсем ĕçлеççĕ. Сапаланчăклă йалхуçалăхне ушкăнлă хуçалăх çулĕ çине тăратрăмăр: колхозсем, коммунăсем тăватпăр, вĕсен ĕçĕсене машинлататпăр. Хутпĕлменлĕхе пĕтертĕмĕр, кулљтурă ĕçне пур йенчен те вăйлататпăр. Капиталис, буржуй таврашĕсене тĕппипе пĕтерсе пыратпăр. Çаксемшĕн тĕнчери капиталиссем пире курайманççĕ. Вĕсем пире хирĕç вăрçа хатĕрленеççĕ. Пирĕн сыхă тăмала. Епĕр тата пĕччен мар: пирĕнпе пĕрле пĕтĕм тĕнчери пролетари. Вăрçă пулсан, вĕсем пире капиталиссемпе вăрçма пулăшаççĕ.

б) Класра вулакан кĕнекерен учитĕл кăтартса панă статйасенчен б, г, д, ж, з саспаллилĕ сăмахсене пухса вĕсене алфавит тăрăх çырса парăр.

Алфавитра саспаллисен йĕрки çапла: **а, б, в, г, д, ă, е, ĕ, ж, з, и, й, к, л, љ, м, н, њ, о, п, р, с, ç, т, ť, у, ў, ф, х, ч, ц, ш, ы.**

# § 12. Йанăранă майлă илтĕнекен хупă сасăсем.

*69-мĕш ĕç.* Çакăнти паллă тунă сасăсем йепле илтĕннине асăрхăр.

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Тап | çуп | кат | çут | аш | хуш |
| Тапас | çупас | катăк | çутă | ашĕ | хушу |

Тап сăмахри п сасăпа тапас сăмахри п сасă пĕр пек илтĕнет-и?—Тап сăмахра йанăрамасть, тапас сăмахра йанăрать. Çавăн пекех кат сăмахра т йанăрамасть, çав сасах катăк сăмахра йанăрать.

Хăçан п, т сасă йанăрамасть, хăçан йанăранă майлă—б, д сасă майлăрах илтĕнет?

**П, к, т, ш, с сасă, икĕ уçă сасă хушшинче пулсан, б, г, д, ж, з майлăрах илтĕнет.**

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Апат | така | пăта | лаша | асап |
| Упа | пукан | патак | ăшă | усал |

Çак сăмахсенче п, к, т, ш, с сасă мĕнле илтĕнет? Мĕншĕн йанăраса илтĕнет?

*70-мĕш ĕç.* а) Тыт, кас, çап, тăк, тăс, мамăк, тăлăп, ыраш. Çак сăмахсен вĕçĕнчи хупă сассисене йанăракан тăвăр.

Т ĕ с л ĕ х: Тытас, мамăка.

б) **П, к, т, ш, с** сасăсем йанăраса илтĕнекен сăмахсене тупса парăр, кашни сасă пуçне виçшер сăмах.

*71-мĕш ĕç.* Çакăнта паллă тунă сасăсене пĕр-пĕринпе танлаштарса пăхăр.

| | | | |
|---|---|---|---|
| **пар** | **кил** | **курак** | **аш** |
| мана **пар** | кунта **кил** | **курак** ури | **аш** ил |

**Пар** сăмахра **п** мĕнле илтĕнет? **Мана пар** тесенех, çав **п** мĕнле илтĕнет?—Йанăрать: **мана бар** майлăрах илтĕнет. Мĕншĕн? Халĕ **п** сасă икĕ уçă сасă хушшинче тăнăран.

Çакăн пекех ытти паллă тунă сасăсене те танлаштарса пăхăр.

*72-мĕш ĕç.* Сăмаха татăкламасăр та, татăкласа та вулăр.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Купа | мăка | пăта | ăшăх | сасă |
| Ку-па | мă-ка | пă-та | ă-шăх | са-сă |

**Купа** тесе каласан, **п** мĕнле илтĕнет? Çав сăмахах татăклăн **ку-па** тесе каласан, **п** мĕнле илтĕнет? Халĕ мĕншĕн йанăрамасть? Татăклăн каласан, халĕ **п** икĕ уçă сасă хушшинче тăмасть.

Ытти тĕслĕхсене те çаплах танлаштарса пăхăр.

Чувашская Республ... СПЕЦФОНД № 3062



Хакĕ 40 пус

Переплет 25 пус

18074

Ф. Т. ТИМОФЕЕВ

УЧЕБНИК ПО ЧУВАШСКОМУ ЯЗЫКУ

Грамматика и орфография

Для начальной школы. Часть I.

Чувашское Государственное Издательство

Чебоксары 1934